❑ ИСАЕВ ЮРИЙ НИКОЛАЕВИЧ



# ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ВĔРЕНӲ ТЫТĂМĔН ХАЛЬХИ ЛАРУ-ТĂРĂВĔ ТАТА АТАЛАНУ ПУЛАСЛĂХĔ

**Аннотаци:** Статьяра Чăваш Республикин вĕренӳ тытăмĕ аталанăвне кĕретлĕ тăвакан статистика кăтартăвĕсене пăхса тухнă, пĕтĕмĕшле (шкул умĕнхи, шкул тапхăрĕн), професси тата хушма вĕренĕвĕн хальхи лару-тăрăвне çырса панă. Хальхи вĕренӳ тытăмĕн тĕрлĕ шайĕнче палăракан паянхи кăткăс ыйтăвĕсене тупса куç умне кăларнă, вĕсене епле татса памалли ку е вăл çул-йĕре сĕннĕ. Регионсен вĕренӳ тытăмĕ шайлашуллă аталанни Раççей Федерацийĕн вĕренӳ талккăшне йĕркелесе пымалли витĕмлĕ вăй пулнине ятарласа палăртнă. Автор Раççей халăхĕсен чĕлхисене аталантарма май паракан услови тăвас пирки хăй мĕн шухăшланине ăнлантарнă. Статьяра уйрăмах педагогика ĕçченĕсене тăтăшшăн вĕрентес ыйтăва тимленĕ.

**Тĕп сăмахсем:** çын хаклăхĕ, вĕренӳ тытăмĕ, педагогикăн хальхи технологийĕ, ĕç рынокĕ, вĕренӳ талккăшĕ, олимпиада юхăмĕ, XXI ĕмĕрĕн чĕнĕвĕ, вĕренӳ регионланăвĕ (ргионланни), вĕренӳ шайĕсем, тăтăш вĕренӳ тытăмĕ, тăван чĕлхесене сыхласа аталантарасси, педагогсене методика енчен пулăшу парса тăрасси, пĕрлештернĕ вĕренӳ программисем, кăткăс технологиллĕ профессисем, ĕçлевлĕх квалификацийĕсен центрĕсем, демографи лару-тăрăвĕ, педагогика мелĕсене пайăрлатасси, регионăн вĕренӳ талккăшĕ, педагогика ĕçченĕсен профессипе çыхăннă «çитменлĕхĕ».

## The Current Status of the Education System of the Chuvash Republic and its Development Perspective

**Abstract:** This article presents the statistics of the development of Chuvash Republic's educational system, describes the modern state of general (preschool, school) education. The article also describes current problems of educational system on different levels and lists possible solutions of those problems. Main attention is given to the fact that balanced development of regional systems of education is a key factor of forming unified educational system in Russian Federation. Author gives his own point of view on the creation of conditions for preservation and development of Russian people's native languages. Special attention was given to the problems of development of system of the continuous education of teachers.
**Keywords:** human assets, educational system, modern teaching technologies, job market, Olympic movement, challenges of XXI century, regionalization of education, system of continuous education, preservation and development of native languages, teachers expertise, integrated

educational programs, high-tech professions, centers of applied qualification, demographic situation, individualization of teaching process, regional educational system, lack of teachers.

**Çuvaş Cumhuriyeti'nin Eğitim Sisteminin Günümüzdeki Durumu ve Gelişim Perspektifi**

**Özet:** Bu makale Çuvaş Cumhuriyeti'nin eğitim sisteminin gelişim istatistiklerini sunmaktadır ve genel eğitimin (okul öncesi, okul dönemi) modern halini tasvir etmektedir. Makale ayrıca eğitim sisteminin faklı seviyelerdeki güncel sorunlarını da tanımlamakta ve bu sorunların muhtemel çözümlerini de sıralamaktadır. Eğitimde bölgesel sistemin dengeli bir şekilde geliştirilmesinin Rusya Federasyonundaki birleşik eğitim sisteminin şekillendirilmesinde anahtar rolü üstlendiği gerçeği esas odak noktasıdır. Yazar Rus halkının ana dillerinin gelişimi ve korunması için gerekli koşulların yaratılması konusunda kendi görüşlerini sunmaktadır. Öğretmenlerin devam eden eğitim sistemindeki gelişmelere dair sorunlarına ise özellikle daha çok önem verilmiştir.

**Anahtar Kelimeler:** İnsan varlıkları, eğitim sistemi, modern öğretme teknolojileri, çalışma sahası, Olimpik hareketi, XXI. yüzyılın zorlukları, eğitimin bölgeselleştirilmesi, devam eden eğitim sistemi, ana dillerin korunması ve geliştirilmesi, öğretmenlerin uzmanlığı, bütünleşmiş eğitim programları, yüksek teknoloji meslekleri, uygulamalı yeterlilik merkezleri, demografik durum, öğretim sürecinin bireyselleştirilmesi, bölgesel eğitim sistemi, öğretmen eksikliği.

Чӑваш Республикине 2035 ҫулчченхи тапхӑрта аталантарас енӗпе 2018 ҫулхи ҫӗртме уйӑхӗнче йышӑннӑ стратегире Чӑваш Республикин вӑрах вӑхӑтлӑх пысӑк тренчӗсене, аталанӑвӗн пӗлтерӗшлӗрех ҫул-йӗрне тата пуласлӑхӗн сӑн-сӑпатне палӑртнӑ. Стратегире ҫырнӑ тӑрӑх, хальхи экономика аталавӑне ҫын хаклӑхӗ вӑй парать. Пурте пӗлет: индустри аталаннӑ обществӑна малалла талпӑнма хистекен чи пӗлтерӗшлӗ вӑй ҫын хаклӑхӗ пулса тӑрать. Вӑл ҫут ҫанталӑкран та, пухнӑ укҫа-тенкӗрен те хӑватлӑрах. «Ҫын хаклӑхӗ» терминпа пирвайхи хут 1961 ҫулта Теодор Шульц усӑ курнӑ: «Ҫын хаклӑхӗ тени анлӑ ӑнланас пулсан экономика аталанӑвӗн, общество тата ҫемье аталанӑвӗн ресурс пайне, пӗлӗве, ӑс-тӑн тата управлени ӗҫӗн инструментарине, пурнӑҫ тата ӗҫ вырӑнне тытса тӑракан тухӑҫлӑ производство факторне пӗлтерет; ҫавна май производствӑн пайталлӑ тата тӗрӗс аталану факторне тивӗҫтерекен ҫын хаклӑхне вӑй парса тӑма пулать» (Лысков 2009: 11).

Кӗрет паллӑ, ҫын хаклӑхӗ экономика аталанӑвӗн хӑвӑртлӑхне витӗм кӳрет, ҫавна май общество ҫын хаклӑхне тӑвакан вӗренӳ тытӑмӗпе вӑйлӑрах кӑсӑкланать. Ҫавнашкалах ак мӗн палӑртмалла: экономика тухӑҫлӑ аталаннӑ ку е вӑл ҫӗр-шывра вӗренӳ содержанине ҫӗнетес енӗпе активлӑ ӗҫ пырать; улшӑну пусӑмӗ вӗренӳ предмечӗпе пӗлӳ парасси ҫинчен тӗрлӗ енлӗ хӑнӑху аталантарасси ҫине куҫать. Пуласлӑхӑн чи йывӑр енӗсем – технологи улшӑнӑвӗ епле ҫулпа каясси паллӑ марри, хулалану сарӑлни, унӑн витӗмӗ халӑхӑн пурнӑҫӗпе демографи тытӑмӗнче палӑрнине, тӑван чӗлхи хӑш чӗлхе пулнине палӑртасси, политикӑра тата обществӑра ҫирепленнӗ пахалӑх тытӑмӗ улшӑнни. Аналитиксем ҫирӗплетнӗ тӑрӑх, паян кун халӑхсен историйӗнче информаципе хутшӑну енчен революци пулса иртет, вӑл тӗнче тӗпӗ-йӗрӗпе улшӑнасси патне илсе пырать.

Чӑваш Енре, пӗтӗм Раççейри пекех, тапратнӑ тема пирки нумай тавлашаççӗ, вӗренӳ тытӑмне, вӑл XXI ӗмӗр кӑларса тӑратнӑ ку е вӑл йывӑрлӑха чӑтма хатӗррипе хатӗр маррине расна форматпа сӳтсе яваççӗ. Чиновниксем, вӗренӳ организацийӗсен ертӳҫисем, педагогсем вӗренӳ

организацийĕсем инноваци аталанăвне хатĕррипе хатĕр марри çинчен – уйрăмах ачасене «пысăк улшăну тапхăрĕнче пурăнма» хатĕрлесси çинчен калаçаççĕ.

Вĕренӳ тытăмне сисĕнмелле демократизациленĕ лару-тăрура патшалăх политикинче чи кирлĕ ыйтусенчен пĕри çĕр-шывăн пĕрлĕхлĕ вĕренӳ хутлăхне упраса хăварасси пулса тăрать. «Мĕн тесен те, çĕр-шывăн пĕрлĕхлĕ вĕренӳ хутлăхне сыхласа хăварассине, общество интересĕсен суйлавлă пулăшăвĕпе килĕшӳлĕхне чи кирлĕ ыйтусенчен пĕри тесе палăртнă политикăна вĕренӳ талккăшĕнче тытса пыма регионсен вĕренӳ аталанăвĕнче шайлашу çукки йывăрлатать» (Задорожная 2001: 4). Ку ыйтăва татса панă чухне, паллах, рагионсен вĕренӳ тытăмĕ шайлашуллă аталанни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Кунпа пĕрлех тĕпчевçĕсем регионланăва Раççей вĕренĕвне çĕнетессипе çыхăннă ыйтусене татса пама, уйрăм çынпа пайăррăн ĕçлеме май паракан чăннипех те кирлĕ процесс пулса тăрать тесе палăртаççĕ (Гашков 2011: 1). Регионланăва Раççей тĕпчевçисем «вĕренӳ уйрăм территори картинче вăй илсе аталанакан услови» тесе пăхаççĕ. Ученăйсен шухăшĕпе, регионланни регионăн социаллă аталанăвĕпе тачă çыхăнать, «регионăн вĕренӳ талккăшĕ» ăнлав çине таянать (Панасенко 2009: 1). Эпир ĕненетпĕр: малашне регионлану процесĕ уйрăм çыннăн, уйрăм регионăн тĕллевĕсене пурнăçлама май парса, регион аталанăвĕшĕн уйрăм пĕлтерĕш туянса тата пысăкрах хăвăртлăх илет. С.Н. Гашков çырнă тăрăх, «…Раççейре регионсен уйрăмлăхĕ ӳсни Раççейĕн пĕтĕм социумĕн тăнăçсăрлăхĕнчен, çĕр-шывăн хăйне евĕр условийĕнчен килекен хăйне майлă кăтартусемпе палăрса тăрать» (Гашков 2011: 3). Апла пулин те акă мĕн асра тытмалла: регионсен вĕренӳ тытăмĕ, тĕпрен илсен, ырă хевтеллĕ тата аталанăвăн «регион аталанăвне килĕшӳллĕ ӳстерекен механизм шайне çитнĕ» стратеги пайĕ пулса тăрать» (Задорожная 2001: 2). Чăваш Енре, тĕслĕхрен, вĕренӳ бюджечĕ республикăн пĕрлештернĕ бюджечĕн 30 проценчĕпе танлашать, вĕренӳ организацийĕсенче 23 пине яхăн педагог ĕçлет, 300 пине яхăн ачапа çамрăк вĕренет. Çакă, паллах, вĕренӳ отраслĕ халăхпа экономика аталанăвĕнче пысăк вырăн йышăннине кăтартать.

Тата çакна палăртса хăвармалла: хальхи вăхăтра ăслăлăхра «вĕренӳ талккăшĕ» ăнлав çирĕпленмен-ха, çапах «Раççей Федерацийĕн вĕренӳ çинчен калакан законĕнче» «пĕрлехи вĕренӳ талккăшĕ» терминпа усă курнă (Дадаев 2011: 51). Çакă вара термин юриспруденци енчен çирĕпленнĕ тесе пĕтĕмлетӳ тума май парать. Р.Е. Пономарев çапла палăртать: «Вĕренӳ талккăшĕ çинчен калакан вĕрентĕвĕн хальхи содержанийĕ В.П. Борисенков, Т.Ф. Борисова, М.В. Борытко, Г.И. Герасимов, О.В. Гукаленко, А.Я. Данилюк, Н.В. Наливайко, С.М Редлих, В.И. Слободчиков, В.М. Степанов, И.Д. Фрумин т. ыт. çырнинчен тухса тăрать» (Пономарев 2014: 37). Тĕпчевçĕсем мĕн каланине тишкернĕ хыççăн Р.Е. Пономарев çакнашкал пĕтĕмлетет: «Вĕренӳ талккăшĕ вăл хутлăх тĕсĕ тата çын тавралăхпа хутшăнса хăй культурине пуянлатса пурăнакан вырăн» (Пономарев 2014: 45). Çав вăхăтрах акă мĕн палăртмалла: вĕренӳ талккăшĕ вăл (вĕренӳ вырăнĕпе танлаштарсан) чылай пысăк объективлăх пуррипе уйрăлса тăрать, çавна май вĕренӳ тытăмне модельлеме май паракан ресурс пулать. Модельлени çĕнелĕве чарăнасран сыхласа территорисене пĕтĕм комплекспа анлăн аталантарма пулăшакан мел пулса тăрать (Пономарев 2014: 52).

«Раççей Федерацийĕн вĕренӳ çинчен калакан законĕн» 10-мĕш статйинче каланă тăрăх, вĕренӳ тытăмĕ (вĕренӳ системи) çакнашкал пайсенчен тăрать: федерацин патшалăх вĕренӳ стандарчĕ тата федерацин патшалăх требованийĕсем, вĕренӳ стандарчĕсем, нумай шая шута илсе ăсталанă вĕренӳ программисен тĕрлĕ тĕсĕ; вĕренӳпе ĕçлекен организацисем, педагогика ĕçченĕсем, вĕренекенсем тата ача-пăча ашшĕ-амăшĕ; вĕренĕве ертсе йĕркелесе пыракан патшалăх влаçĕн

органĕсем тата Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен патшалăх влаçĕн органĕсем, вырăнти хăй тытăмлăхăн вĕренĕве ертсе йĕркелесе пыракан органĕсем; вĕренĕве мĕн кирлипе тивĕçтерсе тăракан, вĕренӳ пахалăхне хаклакан органсем т. ыт. те.

Регионсен вĕренӳ тытăмĕ çинчен калаçу пуçланă чухне эпир чи малтан Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен патшалăх влаçĕн вĕренӳпе ĕçлекен органĕсем, регионăн вĕренӳ организацийĕсем тата вырăнти хăй тытăмлăхăн вĕренĕве ертсе йĕркелесе пыракан органĕсем, муниципалитетсен вĕренӳ организацийĕсем çинчен шухăшлатпăр. Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен патшалăх влаçĕн вĕренӳпе ĕçлекен органĕсен полномочийĕсене Федераци законĕн 8-мĕш статйинче палăртнă. Вĕсенченчи чи кирлисем шутне çаксем кĕреççĕ: регионсен вĕренĕве халăх пурнăçĕпе экономика, экологи, демографи, этнокультура тата ытти уйрăмлăхне шута илсе аталантармалли программисене тăвасси; муниципалитетсен шкулченхи вĕренӳ организацийĕсенче тӳлевсĕр вĕренме, муниципалитетсен пĕтĕмĕшле вĕренӳ организацийĕсенче тӳлевсĕр вĕренмелли ирĕклĕхпе кашни çын туллин усă курма патшалăх гарантине çирĕплетесси. Куна пурнăçлама вырăнти органсен бюджетне субвенци памалла. Ку шутпа ĕç укçи памалли, учебниксемпе вĕренӳ кĕнекисене, вĕренӳ хатĕрĕсемпе вăйă теттисем туянмалли расхутсене саплаштармалла (ку шута зданисене, ушкăнпа усă куракан хуçалăха хутра тытмалли тăкак кĕмест); çынсене вăтам професси пĕлĕвĕ, çав шутра укçасăр вĕренме патшалăх гарантилемелле; хушма професси пĕлĕвне Раççей Федераци субъекчĕсен патшалăх вĕренӳ организациййсенче памалла; муниципалитет вĕренӳ оргнизацийĕсене тата Раççей субъекчĕсен веренӳ организацийĕсене вĕренӳ кĕнекисемпе тата пособийĕсемпе тивĕçтермелле; вĕренӳ организацийĕсене Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен шайĕнче мониторингламалла; пĕтĕмĕшле вĕренӳ программине алла илнĕ чухне, аталанура тата обществăпа хутшăнăва кĕнĕ чухне йывăрлăх туякан ачасене психологипе педагогика, медицина тата социаллăх енчен пулăшу памалла. Вырăнти муниципалитет хăй тытăмлăх тата хула округĕсен вĕреннӳпе çыхăннă ыйтăвĕсене татса парас полномочийĕсене Федерацин «Раççей Федерацийĕн вĕренӳ çинчен калакан законĕн» 9-мĕш статйинче кăтартнă. Ку полномочисенчен тĕп вырăнта тăраканнисем çаксем: муниципалитетсен пĕтĕмĕшле вĕренӳ организацийĕсенче çынсене хăйсен кăмăлне çырлахтарса, тӳлевсĕр вĕренме май туни (федерацин пĕтĕмĕшле вĕренӳ программисене патшалăх вĕренӳ стандарчĕсемпе килĕшӳллĕ пурнăçлама укçа-тенкĕ уйăрнисĕр пуçне); ачасене муниципалитетсен вĕренӳ организацийĕсенче хушма вĕренӳ пани (кунта Раççей Федерацийĕ субъекчĕн патшалăх органĕсем финанслакан хушма вĕренӳ кĕмест); ачасене асăрхаса ӳстерме услови туни, ачасене муниципалитет вĕренӳ организацийĕсенче усрани; муниципалитетсен вĕренӳ организацийĕсен çурчĕсемпе хуралтине упраса тăни, вĕсен тавралăхĕнче йĕркелĕх тытни; пĕтĕмĕшле вĕренӳ программипе вĕренме вăхăт çитсе пыракан ачасене шута илни, муниципалитет вĕренӳ организацийĕсене муниципалитет районĕн, хула окургĕн ку е вăл территорийĕ çумне çирĕплетесси т.ыт.те. (Об образовании в Российской Федерации: Федеральный закон от 29 декабря 2012 г. №273-ФЗ).

Çапла вара, ак мĕнле пĕтĕмлетме пулать: вĕренĕвĕн регион тытăмĕн тĕллевĕ вăл кашни çынна хăй правипе шкул умĕн вĕренме, пуçламăш тата вăтам шкулта вĕренме, професси вĕренĕвне иртме тата хушма вĕренме май туса парасси пулса тăрать. Унта ирĕклĕ аталанăва, мĕн чухлĕ пĕлнине шута илсе вĕрентнине, аталану уйрăмлăхне, çыннăн пултарулăхне, кăсăкланăвне шута илес принципсене пăхăнмалла. Кунсăр пуçне регионăн вĕренӳ тытăмĕн ĕçĕ-хĕлĕ региона мĕн кирлĕлĕххине кура çакнашкал пулмалла: «… регионсем хушшинче çыхăну туни, абитуринтсемпе выпускниксем территори тăрăх ăçтан-ăçтан пулнине, ăçта-ăçта кайнине тĕпчени,

промышленность енчен консультацилени, … региона мĕн чухлĕ кирлипе кирлĕ маррине хаклани, маркетинг тата стратеги енчен планлани, йĕркелев инфраструктури, шалти диалог валли механизм тăвасси…» (Лысков 2009: 3).

«Регионсен вĕренӳ тытăмне тишкерсе тĕпчевçĕсем никĕсре выртакан виçĕ фактора палăртма сĕнеççĕ: регионăн демографи лару-тăрăвĕ, регионăн обществăпа экономика аталанăвĕ тата вĕренӳ тытăмĕ хăй» (Панасенко 2011).

Раççейĕн хальхи демографи лару-тăрăвĕ ярт курăнакан кризис пуррипе палăрса тăрать, çапах та вăл юлашки вăхăтра кашт лăпланчĕ тата, ĕç хучĕсене çывăх çынсем пĕлтернĕ тăрăх, демографин начар кăтартăвĕ ӳсме чарăнчĕ.

Чăваш Енĕн демографи лару-тăрăвне хак пама май паракан хăш-пĕр статистика кăтартăвĕпе паллашар-ха. Шел те, Чăваш Ен демографи пăтăрмахĕнчен паян кун та тухса пĕтмен-ха. Çакна халăх йышĕ çулсерен чакни çирĕплетет. 2018 çулта Чăваш Енре 1, 23 миллионран кăшт нумайрах çын пурăннă. 1989 сулхипе танлаштарсан – пурăнакансен йышĕ 8 процент чакнă (1989 çулта 1,338 млн çын пулнă). Ял çыннисен йышĕ тата хăвартрах чакать: юлашки 29 çул хушшинче ялта çын йышĕ 18 процент чухлĕ чакнă. Ку кăтарту республикăн вăтам кăтарăвĕнчен 2 хут нумайрах (1 табл. пăхăр).

Чăваш Енĕн халăх йышĕ (1989 тата 2018 çулсем)

1-мĕш табл.

| Çул | Пĕтĕм халăх йышĕ | Çав шутра | | Пĕтĕм йышăн миçе процентне танлашни | |
|---|---|---|---|---|---|
| | | хула халăхĕ | ял халăхĕ | хула халăхĕ | ял халăхĕ |
| 1989 | 1338,0 | 771,1 | 567,0 | 57,63 | 42,37 |
| 2018 | 1231,1 | 769,0 | 462,1 | 62,46 | 37,54 |

Чăнлăх мĕнлине кура, паллах, ял шкулĕсен тата весенче вĕренекен ачасен шучĕ те чакать. 2018 çулта Чăваш Енре 317 ял шкулĕ шутланнă, вĕсенче 43,9 пин ача вĕреннĕ (2004 çулта 467 шкул, 71,3 пин ача пулнă). Ял шкулĕсен лару-тăрăвне, вĕсенче вĕренекен ача йышĕ хальччен пулманла чакнине ятарласа тишкермелле, пĕтĕмлетӳ тумалла. Апла пулин те ак мĕн палăртмалла: пирĕн çĕр-шывра шкул, уйрăмах ял шкулĕ, традици тăрăх ахаль шкул çеç пулман – ачасемпе çамрăксене тата аслисене культура, чун-чĕм ăс парăвĕн центрĕ пулнă тата пулса тăрать. Çак йăла-йĕрке Раççейре нумай-нумай ĕмĕр хушшинче вăй илсе çирĕпленнĕ. Халăх ялтан куçса хула çынниленнине эпир чараймăпăр, çапах ĕненетпĕр: нумай нациллĕ Раççейре йăла-йĕркене, чĕлхесене упраса хăварма уйрăмах наци республикисен ял шкулĕсен пĕлтерĕшĕ пысăк, çавăнпа вĕсене ятарлă пулăшу кирлĕ. Чăваш Енĕн халăхпа экономика лару-тăрăвне çырса кăтартас умĕн эпир республика пĕр тикĕссĕн аталаннине палăртасшăн. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашне 1919 çулшăн янă çырăвĕнче палăртнă тăрăх: «Пирвайхи хаклава пăхсан республикăн экономикине 2016 çултан тытăнса 150 млрд ытла тенкĕ инвестици укçи хунă. Эпир 2020 çулта инвестици калăпăшĕ малтан планланă пек 250 млрд мар, 260 ытла млрд тенкĕ пулать тесе шанса тăратпăр. Çĕнĕ производствăна хута яма, пуррине çĕнетме, шутланă тăрăх, бюджет тулаш çăл куçĕсенчен 125 млрд ытла тенкĕ илсе усă курнă, 2020 çулта вара 220 млрд тенкĕ илме планланă. Инвестици проекчĕсене пурнăçа кĕртсе республика экономикин мĕн пур сферинче

юлашки вицĕ çул хушшинче ĕç вырăнĕ çĕнĕрен 7 пин ытла тунă. 2020 çул тĕлне çĕнĕ ĕç вырăнĕ 11 пине яхăн тума палăртнă. Пĕр уйăх ĕçĕн вăтам укçине ӳстерме палăртнă тĕллев те пурнăçланать: 2020 сул тĕлне вăтам укça сахалтан та 30 пин тенкĕ пулать. 1918 çулта, шутланă тăрăх, ĕç укçи чăннипе 27165 тенкĕпе танлашнă (ку вăл пĕлтĕрхипе танлаштарсан 107 процент пулать). Прогнозланипе, 2020 çулта вăтам укça 32 пин тенке яхăн пулмалла. Шутласа хунă тăрăх, ĕç укçи 2025 султа 45 пин тенкĕрен иртмелле, 2030 çулта 62 пин тенкĕ таран ӳсмелле».

Республика малалла аталаннине регионăн пĕтĕм продукцийĕ (РПП) мĕнле пулнинчен пĕлме май пур. 2018 çулта Чăваш Енте РПП, Чăваш Енĕн экономика аталанăвĕн министерстви шутласа пĕлнĕ тăрăх, 293, 9 млрд тенкĕпе танлашнă (2016 çулта – 261,6 млрд тенкĕпе).

Вĕренӳ тытăмĕ те вăйлă аталанать. Çакна çирĕплетекен сăлтав – инфраструктура анлăн аталанни (ача пахчисем, шкулсем туни, зданисене тĕпрен юсани, професси вĕренĕвне çĕнетни т. ыт. те). Экономика механизмĕсем те улшăнаççĕ (вĕренӳ организацийĕсен чи лайăх ушкăнĕ йĕркеленни, ĕç укçине çĕнĕлле тӳлени, бюджет тăкакĕсене усăлăх енчен хакламалли индикаторсем çине таянса укçа-тенкĕ тĕллевлĕ уйăрни т. ыт. те). Юлашки вунă çул хушшинче, вĕренӳ валли уйăракан бюджет укçин калăпăшĕ 12 хут ӳсрĕ, кунпа пĕрлех тĕп тăкак чылай пысăкланчĕ. 2018 султа вĕренӳ тăкакĕ Чăваш Республикин пĕрлехи бюджетĕнче кăшт çеç 18 млрд тенке çитмерĕ.

Вĕренӳ ăшлăхĕ (содержанийĕ) тĕпĕ-йĕрĕпе улшăнать. Шкул умĕнхи вĕренӳре, шкул вĕренĕвĕнче Федерацин патшалăх вĕренӳ стандарчĕсене вăя кĕртни, професси компетенцийĕсен специализациленнĕ центрĕсене туни, «Çамрăк профессионалсем» юхăм хастарлă аталанни тата ытти çĕнĕлĕх вĕрĕнӳ аталанăвĕн хальхи тапхăрĕн тĕп паллисем пулса тăчĕç.

Вырăс философĕ Н. Трубецкой иртнĕ ĕмĕрĕн пуçламăшĕнчех: «Шкул – Раççейĕн пĕтĕм пуласлăхĕ», – тесе каланă сăмахсене кăшт улăштарса акă мĕн палăртас килет: «ача пахчи – Раççей вĕренĕвĕн пĕтĕм пуласлăхĕ». Этем аталанăвĕнче паллă тапхăр пулнине кура ачалăхăн хăйне евĕрлĕхне, хăй хаклăхне упраса хăварнин пĕлтерĕшне ăнланни (ăна ООНăн Ачалăх прави çинчен калакан конвенцийĕнче тĕп принципсенчен пĕри тесе пăхаççĕ) шкул умĕнхи вĕренĕвĕн Федераци патшалăх вĕренӳ стандартĕнче, Раççей Федерацийĕн вĕренӳпе ăслăлăх министерстви хăйĕн 2013 çулхи юпа уйăхĕн 17-мĕшĕнче тухнă приказĕпе çирĕплетнĕскерте, палăрать (Об утверждении федерального государственного образовательного стандарта дошкольного образования: Приказ Минобрнауки России от 17 октября 2013 г. №1155).

Чăнах та, юлашки çулсенче Чăваш Енре, пĕтĕм Раçейри пекех, шкул умĕнхи ӳсĕме çитнĕ ачасене малалла аталанма тан услови туса парассине уйрăм тимлĕх уйăраççĕ.

Шкул умĕнхи вĕренӳре 342 ача пахчи ĕçлет. Чăваш Енĕн 208 шкулĕнче (пĕтĕм шкулăн 50 процентĕнче) шкул умĕнхи 364 ушкăн тунă. Шкулта тата ача пахчинче тăрăшсах кĕске вăхăтлăх ушкăнсем уçаççĕ. Ачисене килте чун-чĕм енчен ăс паракан çемьесене мĕн пур районпа хулара консультаци пункчĕсем тăваççĕ. Куçра, хăлхара, урара, ăс-тăнра тата ыттинче кăлтăк пуррисене шкул умĕнхи 40 учреждениe ятарлă пулăшу параççĕ.

Хальхи вăхăтра шкул умĕнхи вĕренĕве 77 пине яхăн ача, вăл шутра ясли ӳсĕмĕнчи 13 пин ача, çӳрет. Ача пахчисем вырăн парса мĕн пур ачан 69 процентне тивĕçтереççĕ (2000 çулта кăтарту 56,2 % пулнă), ясли ӳсĕмĕнчисен – 29,4 процентне. Шкул умĕнхи вĕренĕвее 3-рен аслă мĕн пур ачана явăçтарнă, муниципалитет пулăмĕсенче – 1,5 çултан иртнĕ пĕтĕм ачан 70 процентне.

Вĕренĕве явăçни тăтăшшăн ӳснипе ачасене пĕтĕмĕшле пĕлӳ илес умĕнхи старт условийĕсене пĕрешкеллетме май килет паллах.

Ача пахчисенче пĕчĕккисен аталанăвне ӳстерме пулăшакан хатĕр-хĕтĕр таврашне тăвас енĕпе пысăк ĕç пырать, ăс-тăн, çынпа çын хутшăнăвĕ, эстетика аталанăвĕ валли лаптăксем янтăлаççĕ (технологи лабораторийĕсем, пĕчĕк киностудисем, тăм савăт, сĕтел-пукан мастерскойĕсем, пĕчĕк парикмахерскисем, сасă çыру студийĕсем т. ыт. те уçнă). Ку енĕпе хастарлă ĕç уйрăмах Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкарăн шкулччենхи вĕренӳ учрежденийĕсенче пырать.

Ача пахчисенче экологи юхăмĕ анлă сарăлать (хĕлле сачĕ, пĕчĕк лаборатори, чĕрĕ кĕтес, пахча, сад, ача пахчин чечеклĕх кĕтесĕллĕ вырăнĕ, экологи сукмакĕсем, метеорологи лаптăкĕ). Ку кашни ачан пултарулăхне тата творчество хевтине вĕсен уйрăмлăхне тата чун туртăмне шута илсе аталантарма май парать.

Мĕн тесен те, шкул умĕнхи вĕренӳре татса паман ыйтусем ытлашшипех. Вĕсенчен чи пĕлтерĕшли, пирĕн шухăшпа, инноваци проблематики пĕрешкеллипе çывăх ертӳçĕ ача пахчисем хушшинче, вĕсенче ĕçлекен педагогсем хушшинче уçăмлă çыхăну çукки. Педагогикăра тупнă çĕнĕлĕхе пурнăçа кĕртнине ăслăлăхпа методика енчен ертсе пырура юсавлă ĕçлекен механизм çитмест! Йывăрлăхсем шкул умĕнхи вĕренӳ организацийĕсене квалификациллĕ кадрсемпе тивĕçтерессинче те пур.

Хальхи вăхăтра шкул умĕнхи вĕренӳ тытăмĕнче 6 пин ытла педагог ĕçлет. Вĕсен 30% – 35 çулсенче, анчах вĕсен 60 проценчĕ кăна аслă пĕлӳллĕ (ку кăтарту 2008 çулта 40% пулнă).

Вĕренӳ тытăмĕнче ĕçлекен педагогсен ăсталăхне ӳстерессипе çыхăннă ыйтăва татса памалли мелсенчен пĕри тесе Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ (ЧРВИ) педагогикăн ăнăçлă практикине педагогсене хăйсене (вĕренӳ организацийĕн ертӳçисене, ĕçре малта пыракан педагогсене) явăçтарса анлăн сарни тесе пăхать.

2018 çулта институт вĕренӳ организацийĕсенчен 126-ĕшĕпе (вăл шутра шкул умĕнхи вĕренӳ организацийĕсенчен 21-ĕшĕпе) педагогика ĕçченĕсене ăсталăх енчен тăтăш аталантарас тĕллевпе профессин хушма программисене сеть мелĕпе пурнăçласси, пĕрлехи мероприятисем ирттересси çинчен килĕшӳ (договор) тунă. Лайăх тухăçпа ĕçлекен пысăк профессиллĕ педагогсем паян куншăн пĕлтерĕшлĕ автор программисем хатĕрлеççĕ, вĕсемпе ĕçтешĕсен ăсталахне ӳстерме хутшăнаççĕ.

Паян куншăн татса паман каткăс тема тесе психологсем, шкул умĕнхи вĕренĕвĕн ăстисем сахаллине те шутламалла. Паллах, чи кирлĕ пулăшу тесе логопеди пулăшăвне пăхмалла. Специалистсем палăртнă тăрăх, логопеди енчен пулăшу вăхăтра памасан ачасен яланхи пуплевĕнче тата çырăвĕнче хăйне майлă йăнăшсем вăй илсе аталанаççĕ.

Кĕрет паллă, ача пахчисенче кашнинче логопедсем пулмалла, пысăккисенче – темиçе те. Ача сачĕсенче, пĕчĕккисенче, воспитательсене логопеди енчен пирвайхи пулăшу памалли технологисене вĕрентмелле. Логопедсем шкулсенче те, уйрăмах пуçламăш классенче, кирлĕ. Кунсăр пуçне вĕренӳ организацийĕсенче психологсем, социопедагогсем çитмеççĕ. Мĕн тесен те, федерацин пур пек ресурса перекетлес политики вăйра тăнă чухне регионсем педагогсем çитменнине хăйсем тĕллĕн пĕтерме пултараймаççĕ. Пирĕн шухăшпа, Федерацин законĕн ачасене психологипе педагогика пулăшăвне парасси çинчен калакан положенийĕсене пурнăçа кĕртмелли механизма паян кун та хатĕрлемен. Ку йывăрлăхран тухмалли мелсенчен пĕри вăл регионта ача

шучĕ мĕнле иккенне кура психологсен, социопедагогсен, логопедсен тата ытти специалистсен шутне нормăлани пулма пултарать. Ку вара специалистсен кирлĕлĕхне финанс енчен ĕнентерне чухне пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Педагогсен кашни ушкăнне методика енчен пулăшакан тухăçлă тытăм туса хурасси çывăх вăхăтăн чи пĕлтерĕшлĕ задачи пулса тăрать. Хальхи горизонталь тата вертикаль çыхăнусем тума, урăхла каласан сетьре вĕренӳ организацийĕсен методика пулăшăвĕ илме май паракан килĕшӳллĕ пĕрлĕхне майласа яма, аслă шкулсем те, професси вĕренĕвĕн организацийĕсем те хутшăнмалла.

Хайĕн пĕлтерĕшлĕхне шкулчченхи ӳсĕмри ачасене кашнинех шкул умĕнхи вĕренӳпе тивĕçтересси паян кун та çивĕч ыйту пулса тăрать. Ача пахчисене йышăнма 2 уйăхран пуçласа 3 çула çитичченхи ачасене 22 пин регистрациленĕ. Вĕсенчен 6 пинĕ ача пахчисене çӳресшĕн, анчах вĕсем валли вырăнсем хатĕр мар.

Сывлăх енчен кăлтăк пур ачасене педагогика пулăшăвĕ маларах парас тата вĕсене вĕрентес пирки ĕçлемелли те çук мар.

Вĕренӳ теми çине куçнă май вăл час-час улшăннине палартмасăр май çук. Информацин çĕнĕ технологийĕ ăс-тăн ĕç-хĕлне тата çынсен хутшăнăвне çĕнетсе тăрать. Совет влаçĕ чухнехи тата ун хыççăнхи шкула сыхласа хăварни вăл – утопи. Шкул тĕнче шайĕнче пулса иртекен цивилизациленӳпе тĕпĕ-йĕрĕпе çыхăннă. Апла пулин те, пирĕн шухăшпа, виçĕ вунă çуллăх хушши вĕçĕмсĕр туса пынă реформа пире хальхи шкул мĕнле пулмаллине уçăмлатса параймарĕ-ха. Тата ак мĕн кĕрет курăнать: анăçран килекен хатĕр рецептсем Раççей тĕнчинче вăйлă калча параймаççĕ. Экспертсем анăç çĕр-шывĕсен вĕренӳ тытăмне Раççей цивилизацийĕн уйрăмлăхĕсене шута илмесĕр, нимле улăштармасăр йышăнни яланах начар результат патне илсе пырать тенипе килĕшмесĕр май çук. Пурне те паллă: «кайран хăваласа пыракан çĕнетӳ» ăс-хакăл сферисенче яланах тухăçсăр. Çак çĕнетӳ, инçетрен йĕркелекенскер, ют сăнарсене ӳрĕк-сӳрĕк йышăнтарать, хамăрăнне тума май памасть. Юлашкинчен вара çĕнĕ тĕллевсем лартма май килмест. «Раççейре эпир епле шкул тăватпăр?» – текен ыйтăва çĕр-шывăмăрăн ертӳçи, пирĕн шухăшпа, уçăмлă хуравларĕ: «Пире вĕрентнисĕр пуçне çынна чун-чĕм паракан, çĕр-шывăн пахалăхне, историне, йăли-йĕркине чуна хуракан çын ӳстерекен шкулсем кирлĕ… Классенче Раççейĕн пуласлăхĕ вăй илсе аталанать. Шкул паян кун йыхравне туйса хуравлама пултармалла…»

Хальхи вăхăтăн йыхравĕнчен пĕри, паллах, технологире пачах çĕнĕ йĕрке – пысăк даннăйсемпе ĕçлемелли технологи килни, паянхи операци системисенчен миллион хут хăвăртрах ĕçлеме пултаракан квант компьютерĕсем, çĕнĕ профессисем килни, квалификацие хăвăрт улăштарма сăлтав пурри – пулса тăрать. Стратеги инициативисен агентстви малашлăха палăртнă тăрăх, тата 10–15 çултан 60 яхăн професси пăрахăçа тухать, вĕсем вырăнне пысăк технологиллĕ 200-е майлă çĕнĕ професси килет. Шкул вĕренĕвне хăварт улшăнкан условисене йышăнма хатĕр тăвасси паян кун чи çивĕч ыйтусенчен пĕри пулса тăрать.

2018 /19 вĕренӳ çулĕнче 435 шкул ĕçленĕ (2000 çулта 674 шкул пулнă), вĕсенче 137858 ача вĕреннĕ (2000 çулта – 202468 ача).

Шел те, 2-мĕш сменăра вĕренекен ачасен шучĕ малаллах ӳсет – 2018/19 вĕренӳ çулĕнче иккĕмĕш сменăра вĕренекенсем 7956 ача (5,77%), 2017/18 вĕренӳ çулĕнче 7412 ача (5,51%) пулнă.

Чăваш Енĕн вĕренӳ тытăмĕ мĕн пур çĕнĕлĕхе йышăнма яланах хатĕр пулнипе палăрса тăрать: эпир патшалăхăн пĕрлехи экзаменне irттерессипе аапробаци тăвакан регионсенчен пĕри пултăмăр, вĕренӳпе культурăн пирвайхи комплексĕсене, ресурс центрĕсене, база шкулĕсене т. ыт. те турăмăр.

Материал бази лайăхланнипе пĕрлех çĕнĕ проектсем пурнăçланаççĕ. Çак енĕпе Чăваш Енĕн чылай шкулĕ республикăра кăна мар, Раççейĕн ытти регионĕсенче те паллă.

Чăваш Енте шкул ачисем Пĕтĕм Раççейĕн предмет олоимпиадисене хутшăннин пахалăхĕ пысăк мар. Раççей шайĕнче хутшăннин результатне лайăхлатма ачасен йышне ӳстерни май парать. Иртнĕ çулта Пĕтĕм Раççей олимпиадин шкул тапхăрне 5–11 классенче вĕренекенсен 80% хутшăнчĕ. Олимпиада юхăмĕнче чи пысăк активлăх кăтартакан ачасем Шупашкартан, Çĕнĕ Шупашкартан, Елчĕкпе Патăрьел районĕсенчен пулчĕç.

Чи талантлă ачасем – Пĕтĕм Раççей шайĕнче математикăпа, физикăпа, химипе, биологипе тата информатикăпа irттерекен олимпиадăсен çĕнтерӳçисемпе призерĕсем, кашни çулах «Наногород-Ч» профиль сменине пухăнаççĕ. Унта канакан ачасем валли кейссем хатĕрлеме экономикăн чăн секторне кĕрекен предприятисем хутшăнаççĕ.

Олимпиада юхăмне анлă аталантарма Чăваш Енĕн Правительстви педагогсене тĕллевлĕ хавхалантарни пулăшать. Пирĕн шухăшпа, талантлă педагогсене хавхалантарса пулăшнине, вĕсен пултарулăхне тивĕçлипе хакланине çирĕплетекен пулăмсенчен пĕри вăл Чăваш Енĕн Пуçлăхĕ Пĕтĕм Раççейĕн предмет олимпиадисен çĕнтерӳçисемпе призерĕсене хатĕрленĕ педагогсене премисем укçан (250 пин тенкĕ – 1-мĕш вырăншăн, 150 пин тенкĕ – 2-мĕш вырăншăн) парасси çинчен кăларнă Указĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăчĕ. Ку премие (пĕтĕмпе 17 миллион тенкĕ) 2016 –2018 çулсенче 147 педагог тивĕçрĕ.

Маларах палăртрăмăр ĕнтĕ, республикăра кăсăк проектсем нумай пурăçланаççĕ. Ку енĕпе нумай шкул палăрса тăрать – Шупашкарăн кашни çул тĕп хулан чи лайăх шкулĕ ятне çирĕплетекен шкулĕсем; Çĕнĕ Шупашкар, Улатăр, Çĕмĕрле, Канаш хулисен шкулĕсем; райцентрсенче вырнаçнă Элĕк, Патăрьел, Шупашкар, Вăрмар, Елчĕк, Тăвай шкулĕсем т. ыт. те.

Инноваципе палăрса тăракан ертӳçĕ шкулсенчен пĕри Шупашкар хулин 5-мĕш номерлĕ гимназийĕ шутланать. Ку шкулта пурнăçа кĕртекен (вăл шутра «Сколково» фончĕ пулăшнипе вăй илекен) проектсемпе Мускав, Санкт-Петербург хулисен, Ставрополь крайĕн, Вологда, Архангельск, Свердловск облаçĕсен, Тутар Республикин педагогĕсем интересленеççĕ, ĕçре усă кураççĕ. Гимназире метапредмет тата харкамлăх результачĕсене тĕрĕслесе хакламалли материалсем, кăткăслăхĕпе расна вĕренӳ программисем тăваççĕ.

Пиллĕкмĕш гимнази Раççейĕн 2009 çулта пуçланă компетентность олимпиадин пуçаруçи шутланать. Ку олимпиадăна 2009 çулта irттерме тытăннă. Олимпиада ачасен паян куншăн пысăк пĕлтерĕшлĕ тата пурнăçа кĕртме юрăхлă проект хатĕрлев ăсталăхне вăйă ĕçĕ-хĕлĕпе усă курса туптамалли «тухăçлă шкул» пулса тăрать. Ку проект пурнăçа кĕртнĕ тапхăрта ĕçе Раççейĕн çирĕм ытла регионĕ явăçнă.

Шупашкар хулин 3-мĕш лицейĕн директорĕ пулнă Ирина Ильинична Полбенникова пуçарăвĕпе новатор педагогсем пысăк ушкăнпа хăйне майлă «Вĕренĕве пайăрлатакан «çывăх вăхăтра аталанмалли çул-йĕр» технологи (путеводительсем) хатĕрленĕ. Ăна никĕсленĕ чухне – планра кăтартнă результатсен шайлăх принципне тытса пынă. Авторсем вĕренекенсен хастарлăхне ăшри

тата тулашри вăйпа ӳстерекен ĕç хатĕрĕсен тулли пакетне тата верену пахалăхне хакламалли çĕнĕ тытăм хатĕрленĕ.

Шупашкар хулин 2-мĕш номерлĕ пуçламăш пĕтĕмĕшле вĕренӳ шкулĕ республикăн хальхи вĕренӳ технологийĕсене (ТРИЗ технологи, «французсен технологийĕ», навигаци картти т. ыт.) саракан тытăм лаптăкĕ пулса тăчĕ.

Канаш хулин патшалăх служби тата управлени лицейĕ харпăр хай ертӳлĕх ĕлкине пурнăçа кĕртес енĕпе малта пырать, мĕншĕн тесен ачасем ертӳлех енĕпе чăн ирĕк илеççĕ.

Нумай шкулта вĕренӳ талккăшĕн аталану лаптăкне çĕнетмелли проекта пурнăçлама тытăнчĕç. Шупашкар хулин 59-мĕш шкулĕпе 4-мĕш лицейĕнче питĕ кăсăк та ăнăçлă сĕнӳ-канаш тупнă. Проектпа килĕшӳллĕ, куç хăнăхнă фойесенчен, рекреацисенчен, шкул çум лаптăкĕсенчен, столовăйсенчен асчасене аталантармалли сахал функциллĕ лаптăксем тăваççĕ.

Чăваш Республикин Вĕренӳпе çамрăксен политики министерстви пуçарăвĕпе 2013 çултах 124 шкулта уçнă инженер класĕсем ăслăлăхпа техника енне халăхра сармалли, ачасен кăткăс технлогисемпе, инновцисемпе кăсăкланнине хавхалантармалли пысăк пелтерĕшлĕ вай пулса тăчĕç. Вал «Шкула талпăнакан ăслăлăх» проектра тăсăм тупрĕ. Ку проекта пула база шкулĕсем физика предмечĕпе хальхи хатĕр-хĕтĕр 42 млн тенкĕлĕх туянчĕç. Проект тĕллĕвĕ вузсен ертӳçĕ преподавателĕсемпе лидер шкулсем ертсе пынипе шкул ачисене физикăна тарăн вĕрентесси пулса тăрать. 2019 çулта база шкулĕсенчен 30-ăшне хими тата биологи хатĕр-хĕтĕрĕпе тивĕçтермелле.

Пулас профессисем çинчен сăмах тапратнă май «физика» тата «информатика» предмечĕсен пĕлтерĕшне ӳстерес пирки калаçмасăр май çук. Технологи саманинче пурăнма хатĕрленекен яшсемшĕн «физика» тата «информатика» предмечĕсен пĕлтерĕшĕ пушшех те ӳснине тепре палăртмалла. Экспертсем информатикăна вĕренме хавха пултăр тесе шкул ачисем валли «цифра тытăмĕпе» ГТО кĕртес, тĕрлĕ операци системипе усă курма пултаракан ачасене ятарлă сертификат парас текен питĕ кăсăклă сĕнӳ параççĕ. Ачасен информатикăпа илнĕ компетентноçне аслă шкула вĕренме кĕнĕ чухне шута илмелле. Питĕ ăслă сĕнӳ! Цифра экономики аталанни çинчен каланă чухне эпир пин-пин программист хатĕрлесси çинчен мар, сывлăх сыхлавĕ, патшалăх управленийĕ, «ăслă хуласем» тата ытти нумай отрасль валли специалистсем хатĕрлесси çинчен калатпăр. Специалистсем цифрăсемпе нумай операци тума пултармалла, урăхла каласан тĕнчере пур пĕтĕм цифра хатĕрĕпе тата сервиспа усă курма пултармалла.

Паллах, шкулсен инновациллĕ ĕçĕ-хĕлĕ валли тухăçлă ертӳ кирлĕ. Пирĕн шухăшпа, республикăра, хальлĕхе, инноваци продуктне технологи шайне çитерес тата халăх пурнăçне (практикăна) кĕртес енчен йĕркеллĕ механизм çук-ха.

Наци республикисен хальхи шкулĕсен чи кирлĕ миссийĕсенчен пĕри вăл – Раççей Федерацийĕн халăхĕсен чĕлхисене сыхласа хăварасси. Чăваш Енĕн шкулĕсен 52 процентĕнче пуçламăш пĕтĕмĕшле вĕренӳ калăпăшĕнче пĕтĕм предмета чăвашла вĕрентеççĕ, 15-ĕнче – тутарла; мордва чĕлхине пĕтĕмпе 2 шкулта вĕрентеççĕ. Ытти 195 шкулта вĕренӳ чĕлхи вырăс чĕлхи пулса тăрать.

Чăваш Республикин вĕренӳ институтĕнче тăван тата патшалăх чĕлхисене епле вĕрентессине методика енчен вĕçĕмсĕр кăтартса-ăнлантарса ертсе пыраççĕ. Тăван чăваш чĕлхипе литературин, патшалăх (чăваш) чĕлхин, тăван ен историйĕпе культурин çĕнĕ программисене тăваççĕ, вăйра тăраканнисене çĕнетеççĕ. Пурте пĕлет: Раççей Федерацийĕнче тăван чĕлхене упрама, ăна тĕпчеме

тата аталантарма гаранти паракан нормăпа право акчĕсем – Конституцирен тытăнса ыттисем – вăйра тăраççĕ.

Кирлĕ нормăна Раççей Федерацийĕн «Вĕренӳ çинчен» калакан законĕнче те çырса панă. Ку закона вĕренӳ чĕлхипе тăван чĕлхесене суйласа илмелли, Раççей Федерацийĕн республикисен патшалăх чĕлхине палăртмалли механизм çинчен хушăмсем кĕртнĕ хыççăн правăри хирĕçӳлĕхсене катертнĕ.

Вĕренӳ законне пурнăçа кĕртес пирки калакан хушма документра – федерацин патшалăх вĕренӳ стандартĕнче – Раççейĕн нумай нациллĕ халăхĕн культура расналăхне, чĕлхе эткерлĕхне сыхлас тата аталантарас задачисене чылай туллин кăтартнă.

Уйрăмах паха тесе, пирĕн шухăшпа, вĕренĕвĕн харкамлăх результачĕсенче ачасем хăйсен Тăван çĕр-шывне – Раççее юратас, ăна хаклăх картинче упрас енчен мĕнле пулмалли çинчен, хăйсем хăш этнокультура тата пĕтĕмĕшле наци (Раççей) йышне кĕни çинчен пĕлӳ туянма требовани пуррине пăхмалла.

Çиелтен пăхсан пурте йĕркеллĕ пек. Маларах асăннă документсенче çырнине пурнăçа кĕртни Раççей халăхĕсен чĕлхисене сыхлама, вĕсене малашне тулли пахалăхпа аталантарма пулăшмалла пек, пăшăрханма сăлтав çук пек.

Статистика пачах урăххине калать. Раççĕй тĕнчере пур пĕтĕм çĕр-шывран чĕлхесем чи нумаййисем шутне кĕрет. Тĕп халăхсем 100 яхăн чĕлхепе усă кураççĕ, анчах вĕсенчен вĕренӳре усă кураканнисен шутне 30-ăшĕ кăна кĕрет; хăйсен тăван чĕлхипе ачасен пĕчĕк ушкăнĕ кăна (тĕпрен илсен пуçламăш класра) вĕренет. Çакнашкал лару-тăрăва пирĕн ресубликăра та курма пулать (2010 çулта ирттернĕ перепись тăрăх, Шупашкарта пурăнакан пĕтĕм халăх йышĕнче чăваш хисепĕ 59 процент, анчах 1918/19 вĕренӳ çулĕнче чăваш чĕлхине вĕренме тесе пĕрремĕш класс ачисен 38 проценче кăна суйласа илнĕ).

Пĕтĕм Раççейĕн пăшăрхантаракан лару-тăрăвне чăвашсен перепись кăтартăвĕпе ĕнентерме пулать. Çакăнпа пĕрлех пире наци республикисенче титул нацийĕн йышĕ чакни канăçсăрлантарать.Тĕслĕхрен, юлашки виçĕ перепись хушшинче (1989, 2002, 2010) чăвашсен йышĕ 92100 çын чухлĕ чакнă (пĕр вăтам хула çухалчĕ темелле) (хуласене халăх йышĕ тăрăх ушкăнлани – 2-мĕш таблица).



*Чăваш Республикинче пурăнакан чăвашсемпе ытти наци ушкăнĕсен 1989 – 2010 çç шутланă хисепĕ*

| Хăш наци çынни пулни | Халăх йышĕ, *пин çын* | | | Пĕтĕм ушкăнăн миçе % пулни | | 2010 çул 1989 çулпа танлаштарсан (% тăрăх) |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | 1989 | 2002 | 2010 | 1989 | 2010 | |
| *Пĕтĕм халăх йышĕ* | 1338,0 | 1113,8 | 1251,6 | 100,0 | 100,0 | 93,5 |
| Чăвашсем | 906,9 | 889,3 | 814,8 | 67,8 | 65,1 | 89,8 |
| Вырăссем | 357,1 | 348,5 | 323,3 | 26,7 | 25,8 | 90,5 |
| Тутарсем | 35,7 | 36,4 | 34,2 | 2,7 | 2,7 | 95,9 |
| Мордвасем | 18,7 | 16,0 | 13,0 | 1,4 | 1,0 | 69,6 |
| Украинсем | 7,3 | 6,4 | 4,7 | 0,5 | 0,4 | 64,5 |
| Ытти наци çыннисем | 12,3 | 13,8 | 13,5 | 0,92 | 1,01 | 110,0 |
| Нацие кăтартман | – | 3,5 | 48,1 | – | 3,8 | – |

Паллах, демографи лару-тăрăвĕ чакнин сăлтавĕ чăвашсем хăйсене чăваш тесе каланине хирĕçлени пулса тăрать. Çитменнине, çакнашкал шухăш патне пыма чăвашсене шкулта вырăс чĕлхипе уса курса вĕрентни хистет. Пирĕн шухăшпа, ик чĕлхеллĕ (чăвашсем пурте ик чĕлхеллĕ çынсем) унăн тăван чĕлхи хăш чĕлхе – вырăс чĕлхи-и, чăваш чĕлхийĕ-и – тесе ыйтни çынна суйласа илӳ ситуацине кĕртет, çавна май хăйне майлă хĕтĕртӳ тăвать. Çакă, сăмахсăрах паллă, йышĕ сахал халăхсен тăван чĕлхине аталантарма пулăшмасть.

Раççей халăхĕсен тăван чĕлхине сыхласа хăварса малалла аталантарма федераципе регион шайĕнче пĕр логикăна пăхăнса хатĕрленĕ нормăпа право никĕсĕ вăй памалла.

Пирĕн шухăшпа, çак енчен çитменлĕх федераци шайĕнче те, регион шайĕнче те пур. Тĕслĕхрен, Федерацин шкул умĕнхи вĕренĕвĕн патшалăх стандарчĕ вăйра 2014 çулхи карлачăн (январĕн) 1-мĕшĕнченех тăрать. Стандартра (1.9 п.) шкул умĕнхи вĕренӳ программи Раççей Федерацийĕн патшалăх чĕлхипе пурнăçланать тесе кăтартнă. Малалла ак мĕн палăртнă: программа содержанийĕ Раççей Федерацийĕн чĕлхисемпе пурнăçланма пултарать; тăван чĕлхепе усă курса вĕрентекен программа пĕлĕве Раççей Федерацийĕн патшалăх чĕлхипе илессине сиен кӳмесĕр пурнăçланмалла.

Конституцин норми «таван чĕлхене упрас енчен право шантарать (гаранти парать)» тенипе Федерацин шкул умĕнхи вĕренĕвĕн патшалăх стандарчĕ «программа Раççей Федерацийĕн чĕлхисемпе пурнăçланма пултарать» тени тан маррине курма чĕлхе енчен экспертиза ирттермелле мар. Пирĕн шухăшпа, ФГОС тăван чĕлхесен шкул умĕнхи пĕлӳ илӳ пĕлтерĕшне чылай пĕчĕклетет. К.Д. Ушинский тăван чĕлхе этемлĕхĕн чи аслă ăс паруçи пулнă тата пулĕ тесе каланă самахĕсене аса илтерес килет. Паллă педагог палăртнă тăрăх, тăван чĕлхе нумая вĕрентнисĕр пуçне ку ĕçе тĕлĕнмелле çăмăл тата хăвăрт тăвать. Пĕлĕве питĕ тарăннăн илме май пани тăван чĕлхене нимпе улăштарайми вăй парать. Çакă уйрăмах вĕренĕвĕн малтанхи тапхăрне кăтартуллă. Вырăссен аслă педагогĕпе тавлашаймăн!

ФГОСăн тепĕр норми – «Тăван чĕлхепе усă курса вĕрентекен программа вĕренĕве Раççей Федерацийĕн патшалăх чĕлхипе илессине сиен кӳмесĕр пурнăçланмалла» тени – нимле те регламентланман: «сиен кӳмесĕр» тени мĕне пелтерет, тăван чĕлхепе тата Раççей патшалăхĕн чĕлхипе миçешер сехет, мĕн чухлĕ вăхăт, хăш ӳсĕмре вĕрентмелле? Уçăмсăр формулировкăсем

çукки терĕслев органĕсене тĕрĕслеве хăйсем шухăшласа кăларнă йĕркепе irттерме, вĕрентӳ чĕлхине суйласа илессипе çыхăннă норма акчĕсене хăйсем пĕлнĕ пек ăнланма хистет.

Шкул умĕнхи вĕренĕве ФГОСра кăтартнă пек пурнăçламалли механизма шкул умĕнхи вĕренĕвĕн тĕслĕх программинче (ăна федерацин пĕтĕмĕшле вĕренӳпе ĕçлекен вĕренӳпе меслетлĕх пĕрлешĕвĕ 2015 çулхи çу (май) уйăхĕнче ырланă) палăртнă. Ку документра (вăл ак пирĕн çĕр-шывăн ача пахчисен вĕренӳ программисен йĕркипе содержанине палăртать) тăван чĕлхене вĕрентмелли программăна пурнăçлама юрăхлă услови тăвас пирки пĕр сăмах та çук. Çитменнине, шкул умĕн тăван чĕлхепе пĕлӳ илессин пĕлтерĕшне стандарт хăй чакарни çитмет – вĕренĕвĕн тĕпе хунă тĕслĕх программинче программăна тăван чĕлхепе пурнăçа кĕртме май пуррине пачах асăнман, пурнăçлав механизмне те уçса паман.

Федерацин пĕтĕмĕшле пуçламăш тата пĕтĕмĕшле тĕп вĕренӳ стандарчĕсене пурнăçлас лару-тăру та çавнашкалах.

Хальхи вăхăтра шкул вĕренĕвĕн стандарчĕсем пĕтĕмĕшле пуçламăш тата пĕтĕмĕшле тĕп вĕренĕвĕн тĕслĕх программисемпе килĕшсе тăмаççĕ. Тĕрĕслев органĕсем тĕп вĕренĕвĕн тĕслĕх программисем вăйра тăмаççĕ тесе ăнлантараççĕ. Çавнашкал шухăшлама тĕп вĕренĕвĕн тĕслĕх программисене вăйра тăракан стандартсемпе (вĕсене кĕртнĕ улшăнусемпе пĕрле) килĕштерсе çитерменни май парать. Апла пулсан – Федерацин вĕренӳ çинчен калакан законĕн вĕренӳ организацийĕсем вĕренӳ программисене вĕренĕвĕн тĕслĕх программисене шута илсе федерацин патшалăх вĕренӳ стандарчĕпе килĕшӳллĕ хатĕрлеççĕ текен нормине (12 ст.) епле пурнăçламалла?

Чăваш Енре наци шкулĕн хальхи тытăмĕ иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче йĕркеленчĕ. Ку модель чи тухăçлисенчен, чи тĕрĕссисенчен пĕри пулнă. Вĕренӳ планĕсен варианчĕсенче наци республикисен мĕн пур вĕренӳ организацине шута илнĕ. Тĕслĕхрен, 3-мĕш вариант мĕн пур шайра вырăсла кăна вĕрентекен шкулсен пуçламăш шайĕнче тăван чĕлхене те вĕрентме май паратчĕ. Ку ĕçе пĕтĕмĕшле тĕп вĕренӳ шайĕнче тума 4-мĕш вариант ирĕк паратчĕ. Шел те, ку вариантсем наци республикисенче ĕçлекен вĕренӳ организацийĕсен кашни вак-тĕвекне асăрхама пулăшаймарĕç. Ку уйрăмах пĕтĕмĕшле тĕп вĕренӳ шайĕнче палăрчĕ.

Тĕслĕхрен, пуçламăш сыпăкра вĕренӳ планĕн 4-мĕш варианчĕ тăван (вырăс мар) чĕлхепе вĕрентме тата тăван чĕлхепе тăван литературăна анлăн вĕрентме ирĕк паратчĕ. Вĕренӳ планĕн 5-мĕш варианчĕпе килĕшӳллĕн тĕп сыпăкра тăван чĕлхене тĕплĕн вĕренме юратчĕ, анчах ку вариант 5–9 классенче чăнлăх мĕнле иккенне (вĕрентӳ чĕлхи тăван мар чĕлхе – вырăс чĕлхи пулнине) шута илместчĕ.

Раççейре, уйрăмах наци республикисенче, тăван чĕлхене расна шайра пĕлекен ачасем вĕренекен шкулсем нумай. Республикăсенчен чылайăшĕнче патшалăх чĕлхи çинчен калакан законодательство пур. Наци республикисен тăван чĕлхе вĕренессипе çыхăннă лару-тăрăвне тĕпчеме тата шкул вĕренĕвĕн кашни тапхăрне юрăхлă тĕслĕх программа хатĕрлеме вăхăт çитрĕ. Программăсене Раççей халăхĕсен чĕлхисене сыхлама тата аталантарма май паракан тĕслĕх вĕренӳ планĕсемпе тивĕçтермелле. Кирлĕ пулсан – Федерацин 273 законне улшăнупа хушăм кĕртессипе малла ĕçлемелле.

ЧРВИ федерацин патшалăх вĕренӳ стандарчĕсен çĕнĕ редакцийĕсене тимлĕн тишкерчĕ. Эпир пуçламăш пĕтĕмĕшле вĕренӳ шайĕнче палăракан шухăша ырлатпăр, мĕншĕн тесен унта

республикăн патшалăх чĕлхине пăрăнмасăр вĕренмелли предметсен ретне кĕртме сĕннĕ. Шел те, ку кăтартăва тĕп вĕренӳ стандарчĕн проектне кĕртмен.

Тăван чĕлхе учебникĕсене федераци учебникĕсен ретне кĕртессипе çыхăннă хальхи лару-тăру çине уйрăмах тимлĕ пăхма сĕнетпĕр. Ку тема наци республикисенче анлăн сӳтсе явакан чи пĕлтерĕшлĕ тема пулса тăрать. Каткăс тата финанс енчен тăкаклă схема тăван чĕлхе учебникĕсене тăвассипе активлă ĕçлеме тата ку енĕпе законодательствăна пахăнма пулăшмасть. Регионсенче усă куракан тăван чĕлхе, литература учебникĕсемпе тăван тата патшалăх чĕлхипе кăларакан ытти вĕренӳ хатĕрĕсен списокне çирĕплетме Раççей Федерацийĕ субъекчĕсен патшалăх влаçне ирĕк парсан вырăнлăрах пулĕччĕ.

Эпир тата тăван чĕлхе учебникĕсемпе ирттерекен экспертизăна ансатлатма, экспертиза ирттермелли правăна регионсен вĕренӳпе методика пĕрлешĕвĕсене пама сĕнетпĕр. Куна тумашкăн Федерацин 273-мĕш законне тата ФГОСа ку е вăл улшăну кĕртме тивет.

Раççей Федерацийĕн халăхĕсен чĕлхисенчен пĕрне тăван чĕлхе шучĕпе вĕренессине йĕркелемелли йывăрлăхсенчен пĕри вăл вырăсларан тăван чĕлхене куçарнă вĕренӳ кĕнекисемпе усă курасси пулса тăрать. Федерацин 273-мĕш законĕн 11 статйине 2018 çулхи çурла (август) уйăхĕнче кĕртнĕ 5.1 хушăмĕ питĕ уçăмлă: федерацин патшалăх вĕренӳ стандарчĕсенче çырнă тăрăх, вĕренӳ тăван чĕлхепе илме май пур. Чăваш Енре тăван чăваш чĕлхипе пĕлӳ илесси, уйрăмах, чăваш ялĕсенче вырнаçнă шкулсенче сарăлнă пулнă. Шкулсем математикăпа тăван тавралăх предмечĕсене вĕрентме вырăсларан чăвашла куçарнă учебниксемпе усă курнă. Ку учебниксен вырăсла аналогĕсем федераци списокне ирĕккĕнех кĕнĕ, куна закон пăсални тесе никам та пăхман. Хальхи вăхăтра тĕрĕслев органĕсем вырăсларан чăвашла куçарнă учебника, вăйпах, федераци списоне тепĕр хут кĕртме хистеççĕ. Каламасăрах паллă, ку пăтăрмаха стандартсен çĕнĕ редакцине ятарлă хушăм кĕртсе пĕтермелле.

Наци республикисем Раççей Федерацийĕ халăхĕсен тăван чĕлхисене упрассипе тата тĕпчессипе ĕçлекен фондран пысăк пулăшу кĕтеççĕ. Ку Фонда Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 2018 çулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 26-мĕшĕнче алă пуснă Указĕпе тунă. Шанатпăр: Фонд шкулсенче тăван чĕлхепе усă курса вĕрентессипе, тăван чĕлхесене тата республикăсен патшалăх чĕлхисене вĕренессипе çыхăннă лару-тăрăва лайăхлатассишĕн пĕтĕм вăйне хурĕ. Куншăн федерацин нормăпа право акчĕсене пĕр-пĕринпе килĕштерсе, чи малтан Раççей Федерацийĕн Конституцийĕпе çураçтарса, тӳрлетмелле.

Пирĕн шухăшпа, Фонд вăйра тăракан нормăпа право базине эпир тапратнă ыйтăва тĕпе хурса тишерекен тата лару-тăрăва лайăхлатас енĕпе сĕнӳсем хатĕрлекен комисси тума тивĕç.

Асăнна ыйтусене тĕпе хурса Фонд картинче Раççей Федерацийĕ халăхĕсен тăван чĕлхисене упрассипе тата аталантарассипе яланхи тĕпчевсем ирттермелле. Чĕлхе вĕрентĕвĕн бакалаврĕ Эктор Алос-и Фонт Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕн институчĕ пулăшнипе ирттернĕ тĕпчеве уйрăмах палăртас килет. Тĕпчевре виç чĕлхелĕх, ик чĕлхелĕх вĕренĕве мĕнле витĕм кӳнине кăтартнă. Тĕпчев пĕтĕмлетĕвне «Вĕренӳ ыйтăвĕсем» журналта пичетленĕ.

Уйрăм тимлĕх ăслăлăхпа методикăн пĕрлехи талккăшне тăвасси çине уйăрмалла. Эпир шухăшланă тăрăх, çĕнĕ концепци çине таянса совет тапхарĕнче пулнине – наци шкулĕсен ыйтăвĕсемпе ĕçлекен ăслăлăхпа тĕпчев центрĕсене çĕнĕрен чĕртме май пур. Тăван чĕлхене вĕрентекенсем тăван чĕлхене, литературăна тата Раççей халăхĕсен культурине вĕрентмелли

методикăна ик чĕлхелĕх, виç чĕлхелĕх, нумай чĕлхелĕх талккăшне, нумай культурăлăха шута илсе улăштарса лайăхлатас пирки шухăшлаççĕ. Наци республикисем федераци пулăшăвĕсĕр ĕçлеймĕç. Çавăнпа та совет саманинче пулнă, анчах пачах манăça тухнă лайăх йăла-йĕркене каялла тавăрмалла. Хăй вăхăтĕнче тăван чĕлхесене аталантарассипе ĕçлекен ăслăлăх ушкăнĕсем пулнă. Асăннă çул-йĕр Раççей Федерацийĕн Çут ĕç министерствине пăхăнса тăракан организацин – Патшалăхăн вĕренӳ политикине пурнăçлакан центр çумĕнче халь уçакан Тăван чĕлхесен институчĕн функцийĕсенчен пĕри пулса тăрĕ тесе шухăшлатпăр. Наци республикисен шкулĕсем этнокультура сыхлавçисен статусне ан çухатчăрччĕ.

Эпир пурте XXI ĕмĕр педагогăн професси пĕлтерĕшне улăштарассине лайăх ăнланатпăр. Малтанхи вырăна вĕренӳ йĕркелевçи, консультант, тĕпчевçĕ, проект ĕçĕн ертӳçи функцийĕ тухса тăрать. Каламасăрах паллă, пирĕн ачасем, çамрăксем ăнăçлă, конкуренцире чăтăмлă çынсем пулса ӳсчĕр тесен – педагогсене професси енчен çирĕп компетенци кирлĕ. Юлашки çулсенче, хĕрсе кайсах, педагогсене хатĕрлес, çĕнĕ специальноçа вĕрентес тата вĕсен ăсталăхне ӳстерес пирки тавлашаççĕ. Ку енĕпе хастаррăн тăвакан тĕпчев йышĕ ӳссе пырать. О.Н. Пономарева ак мĕн палăртать: «Хальхи обществăра вĕренӳ пурнăç тăршшĕпех улшăнса пыма тивĕçлĕ иккенне ăнланнипе профессие тăтăшшăн пулса пыракан вĕренӳ (ăна педагогика обществи учительсен професси енчен тăтăш аталанăвĕ тет) умне хăйне майлă задачăсем кăларса тăратрĕ (Пономарева 2014: 1).

2018 / 2019 вĕренӳ çулĕнче Чăваш Енĕн вĕренӳ тытăмĕнче 22 пине яхăн педагог (вăл шутра пĕтĕмĕшле вĕренӳ организацийĕсенче 11 пин çын) ĕçлерĕ. Юлашки çулсенче Чăваш Енте, ытти регионсенчи пекех, педагогика ĕçченĕсен ĕç укçине пысăклатас тесе пысăк ĕç тунă.

ЧРВИ шкул вĕренĕвен тытăмĕнче пухăнса пыракан йывăр ыйтусене палăртас тĕллевпе, вăл шутра професси «дефицичĕ» тавра, учительсемпе пĕр тăтăшшăн ыйтăм ирттрет. Пирĕн учительсем ĕçлеме кашни çул йывăрланса пырать теççĕ. Йывăрлăх опытлă учительсен те, çамрăк специалистсен те пур. Пĕр шухăшласан, реформăсем малалла кайнă май, стандартсене вăя кĕртнĕ май (ăсталăха ӳстермелли курс, педагогика канашĕсем, семинарсем, çавра сĕтелсем те, вĕренӳ пахалăхне ӳстерме тесе ирттерекен т. ыт.мероприяти те тунă май) учительсем çĕнĕлĕхе хăнăхма тивĕç, хăйсене шыври пулă евĕр туймалла пек! Кĕтни кăлăхах иккен! Вĕренӳпе ăс пару ĕçĕн тухăçлăхне чакаракан, вĕренĕвĕн пахалăхне ӳстерме чăрмантаракан пĕтĕмĕшле сăлтавсем çумне учительсем хăйсем ĕçе виçерен нумай путнине, «ĕç хучĕсем айне пулнине» т. ыт. хушса калаççĕ. Профессипе çыхăннă йывăрлăха учительсем педагогика мелĕсемпе кашни ачан уйрăмлăхне шута хурса усă курнă чухне тата кашни ачан аталăвне йĕрркелекен, хавхалантаракан, ачасен вĕренӳ программине алла илнин результачĕсене хаклама усă куракан стратегие тытса пымалли çĕнĕ практика меслечĕсене пурнăçа кĕртнĕ чухне туяççĕ. Анкетăсенче учительсем пĕлӳ шайĕ енчен расна ачасем валли ятарлă ĕç хатĕрлеме, урокра ачасен харпăр уйрăмлăхне шута илме йывăр пулнине палăртаççĕ. Юлашки вăхăтра ача ашшĕ-амăшĕ киле панă ĕç калăпăшĕ ӳснĕçемĕн ӳссе пыни пирки камăлсăрланать. Ку тарăху ахальтен мар – нумай учитель киле панă ĕçе тума мĕн чухлĕ вăхăт кирлĕ пулас пирки сахал шухăшлать. Учительсем ачасене киле мĕн чухлĕ ĕç парса «санпин» ыйтнине тивĕçтерес пирки хутшăнса калаçакан, нормăна тытса пыма сăмах паракан шкулсем çукпа пĕрех. Çав вăхăтрах ача ашшĕ-амăшĕн шухăшне те шута илмелле.Тĕслĕхрен, Мускав хула педагогика университечĕ 2007 çулта вĕренӳ организацийĕсем хăйсен тĕп тивĕçне епле пурнăçланине тĕпченĕ ĕçĕн темисенчен пĕри тесе ача ашшĕ-амăшĕ вĕренӳ йывăрлăхĕ çинчен мĕн шухăшланине пăхнă: «ача ашшĕ-амăшĕ «вĕренӳ кĕнекисене «ытла ăслă» çырнине шута илме,

ачасен ĕç тиевне çăмăллатма, хальхи вĕренӳ технологийĕсемпе хут çинче мар, чăн пурнăçра усă курма сĕнет» (Васильев 2011: 4). Кашни сĕнӳ вырăнлă: 10 çул маларах палăрнă çитменлĕх пĕтес вырăнне паян кун пушшех пысăкланса пырать-çке!

Тухăçлă технологисене мĕнле майпа пурнăçа кĕртсе пымалла? Учительсем вара ку е вăл уçăмлă сĕнӳ параççĕ. «ФГОСа ăнăçлă вăя кĕртес тесе эсир мĕн сĕннĕ пулăттăр?» – текен ыйтăва пирĕн учительсем харăссăн çапла хуравлаççĕ: «Методистсем шкулсене час-час çӳреччĕр, учительсене консультаци паччăр, ку е вăл кĕрет ыйтăва хуравлаччăр тата вĕренӳ материалне хатĕрлеме пулăшчăр», – теççĕ. Ку ĕçе кам тума пултарать? Учительпе юнашар тӳрех кам килсе тăрать? Муниципалитет центрĕн методисчĕ паллах. Тем тесен те, законодательствăпа килĕшӳллĕн муниципалитет шайĕнче методист функцийĕ çук, унченхи методика кабинечĕсенчен информаци центрĕсем, вĕçĕмсĕр килекен цифрăсене, справкăсене, информацие пухакансем пулса тăчĕç. Федерацин «Вĕренӳ çинчен» калакан законне муниципалитетсене методист функцине каялла тавăрма сĕнӳ хатĕрлес пирки шухăшламалла мар-ши? Тен, темиçе муниципалитетăн педадагогсене практика пулăшăвĕ паракан центрне тумалла? Раççейĕн Çут ĕç министерствин педагогика ĕçченĕсен професси ăсталăхне вĕçĕмсĕр ӳстерекен центрсем туса хурас пирки панă сĕнĕвне шута илсе эпир учительсене тĕллевлĕ пулăшу пама пултарăйăпăр-и? Ку ыйтусем валли пирĕн хальлĕхе хуравсем çук. Педагогика ĕçченĕсен професси ăсталăхне ӳстерекен унченхи иститутсен (весен ячĕ мĕнле иккенне пăхмăпăр) хальхи ĕçне йĕркелекен паянхи практика вăйра чухне, организацисемпе педагогсен хутшăнăвĕнче çирĕпленнĕ йĕрке пĕтмен чухне, хальхи финанс механизмĕсем ĕçлемен чухне, пирĕн шухăшпа, педагогсене кашнине уйрăммăн пулăшас, кашнин ыйтăвне васкавлă тивĕçтерес çĕнĕлĕхе пурнăçă кĕртме май килмест.

Педагогика кадрĕсен професси аталанăвĕн механизме тăвассине диплом илнĕ хыççăнхи вĕренӳ картинче кăна пăхмалла мар. Педагогсен нумай «дефицичĕ» (уйрăмах психологипе педагогикăпа, хутшăнупа çыхăннисем), тĕпрен илсен, педагогика вĕренĕвĕнчен килет. Педагогика кадрĕсене хатĕрлессине тĕпĕпе улăштармасан – педагогсен профессионализмĕн пахалăхне хушма професси веренĕвне çĕнетнипе кана ӳстерме çук. Лайăх профессионалсене хатĕрлес енчен, пирĕн, тĕслĕх медиксенчен илмелле: вĕсем пулас специалистсен вĕренĕвне питĕ тĕплĕ йĕркелеççĕ.Тĕлĕнтермĕш: Федерацин «Вĕренӳ çинчен» калакан законĕнче медиксене хатĕрлессине 14 çĕрте çырнă; «Медицина вĕренĕвĕн професси вĕренӳ программисене пурнăçа кĕртессин уйрăмлăхĕсем» ятлă ятарлă статья та пур. «Вĕренӳ çинчен» калакан законра – педагогика кадрĕсене хатĕрлесси çинчен нимле статья та çук.

Педвуз преподавателĕсен професси аталанăвĕн тытăмне йĕркелес тата регионсен кавлификацие ӳстерекен институчĕсене тăвас ыйтăва та, пирĕн шухăшпа, карта лартса çитереймен.

Регионсен ăсталăха ӳстерекен институчĕсенче вĕренӳ тытăмĕнче пулса иртекен пулăмсене методика енчен туллин ертсе пыма халь кам хатĕр? Педагогсене пайăррăн ертсе пыракан преподавательсене шкул пурнăçĕн чăнлăх условийĕсене хăнăхса пыма, конкретлă нуша сиксе тухсан учительсен ыйтăвне тивĕçтерме кам вĕрентет? Ку енĕпе те специалистсене хатĕрлекен тата ăсталăха ӳстерекен институтсен преподавателĕсене хăйсен квалифиацине тăтăш ӳстернĕшĕн, хальхи педагогика технологийĕсемпе усă курнăшăн хавхалантаракан механизма тупса палăртмалла.

Паллах, пирĕн пурнăçа «тăтăш вĕренӳ» ăнлав çирĕппĕн пырса кĕрсе вырнаçрĕ. Унăн логики линиллĕ мар тата технологисем час-час улшăннипе, çын хăйĕн ĕç вырăнне, профессине,

специальноҫне улăштарнипе ҫыхăннă. Иккĕмĕш, виҫҫĕмĕш професси пĕлĕвне илни, унпа пĕрлех ăсталăха ӳстерекен курссенче вĕренни, ҫĕнĕ специальность илни паян кун норма пулса тăмалла, Ку улшăнăва пирĕн ачасемпе ҫамрăксем хатĕр-и? Хатĕрех мар пуль.

Ĕҫ рынокĕ мĕнле улшăнса тăнине халь техникумсемпе колледжсем вăхăтлă туяҫҫĕ.

2018/2019 вĕренӳ ҫулĕнче республикăра професси вĕренӳ организазацийĕ 27 ĕҫленĕ, вĕсенчен 3-шĕ – патшалăх аллинче тăманнисем. Вăтам професси вĕренĕвĕн программине тата 5 вуз пурнăҫлать. Вăтам професси вĕренĕвĕн тыттăмĕнче 1267 преподаватель тата производство вĕренĕвĕн 82 ăсти ĕҫлет.

Республикăра пĕрлешӳллĕ «шкул + колледж + вуз + хушма вĕренӳ организацийĕ + бизнес тытăмĕ» модель аван ĕҫлеме пуҫланă. Ку проект пайтах ҫул дуаль (икĕ организаци пĕр-пĕрин интересне шута хурса йĕркеленĕ) вĕренĕвĕн элеменчĕсемпе усă курнă май пурнăҫланса пырать. Асăннă юхăма Регионсен компетенци центрĕ – Шупашкар электомеханика колледжĕ тата Шупашкарăн 40-мĕш вăтам шкулĕ пуҫарнă. Вĕсем хăйсен пурлахĕ ҫине таянса профиль умĕн тата профиль тапхăрĕнче аслă класс ачисем валли вĕренӳ курсĕсем ирттерме килĕшӳ (договор) ҫырнă.

Ҫавнашкал килĕшӳсене Кванторум ĕҫĕ-хĕлĕн картинче Шупашкарăн 59-мĕш вăтам шкулĕпе, Ҫĕмĕрлен 8-мĕш гимназийĕпе, Ача-пăча (ҫамрăксен) пултарулăх керменĕпе тунă.

Транспорт тата строительство технологийĕсен техникумĕ ял шкулĕсемпе профиль умĕнхи «Ăста строитель», «Платник ĕҫĕ» программăсене пурнăҫа кĕртес енĕпе тачă ҫыхăнура ĕҫлет. Шупашкар шкулĕсен ачисем валли хăйĕн мастерскойĕсемпе лабораторийĕсене Машиностроени техникумĕ уҫрĕ.

Пирĕн шухăшпа, техникумсемпе колледжсен лабораторийĕсемпе шкул ачисем малашне анлăн усă курмалла. Интеграциленĕ программăсене пурнăҫа епле кĕртни ертӳҫĕсен ĕҫĕн пахалăхне хакламалли мел пулма пултарать.

Професси пĕлтерĕшне халăхра сармалли тухăҫлă мелсем шутне, паллах, тĕнчере ирттерекен «Ҫамрăк профессионалсем» (ВорлдСкиллс) юхăм кĕрет. Ку юхăма Чăваш Ен хутшанма тытăннăранпа 7 ҫул иртрĕ. Пирĕн ентешсем тĕнче шайĕнче те, федераци шайĕнче те пысăк ҫитĕнӳ тăваҫҫĕ. Чăваш ҫĕр-шывĕн делегацийĕ 2017 ҫулта Нацин V «Ҫамрăк профессионал» (WorldSkills) чемпионачĕн фестивалĕнче чаплă пĕтĕмлетӳ турĕ – унта хутшăннă 6 ачаран кашниех парнесемпе таврăнчĕ. 2018 ҫулта Нацин VI «Ҫамрăк профессионал» (WorldSkills) чемпионачĕн фестивалĕнче Чăваш Республикин делегацийĕ тупăшăва 10 компетенцире хутшăнчĕ. Конкурс ĕҫĕсене туса Чăваш Республикин команди 7 медаль ҫĕнсе илчĕ те Раҫҫей Федерацийĕн 85 субъекчĕн ретĕнче 14-мĕш вырăн йышăнчĕ.

2018 ҫулта Чăвш Енĕн 3 професси организацийĕ аттестаци иртсен нацин тата регионăн копетенцисен спциализациленнĕ центрĕн (КСЦ) ятне илчĕ. Ҫав йыша Регионсен компетенци центрĕ Шупашкарăн электромеханика колледжĕ (наци статусĕллĕ «Электроника» компетенци центрĕ КСЦ), Шупашкарăн транспорт тата строительство технологийĕсен техникумĕ (регион статусĕллĕ «Кирпĕч хуру» компетенци центрĕ КСЦ) тата Шупашкарăн Н.В. Никольский ячĕллĕ професси колледжĕ (регион статусĕллĕ «Графика дизайнĕ» компетенци центрĕ КСЦ) кĕчĕҫ.

2017 ҫулта Шупашкарăн апатлану технологийĕпе коммерци техникумĕн пурлăхĕ ҫине таянса «Кондитер ĕҫĕ», «Ресторан сервисĕ» компетенциллĕ КСЦсене аккредитациленĕ.

Ĕçлевлĕх квалификацийĕсен 8 центрне хута янă (вĕсенчен 7-ĕшне федераци конкурсĕсенче хутшăннине шута илсе тунă), рабочи кадрĕсемпе специалистсем хатĕрлекен ресурс центрĕсем 14 уçнă. Пысăк партнер компанисемпе пĕрле корпоратив вĕренӳ центрĕсем тăваççĕ, професси инсталляцийĕн (професие теприне пĕрлештерекен) 8 центрĕ ĕçлет.

Чăваш Енре Раççейĕн чи пысăк учрежденийĕсенчен пĕрне – Регионсен компетенци центрне уçнă. Кун пек центрсем пĕтĕм Раççейĕпе те 7 çеç.

Хальхи вăхăтра професси вĕренӳ организацийĕсем экзамена практика мелĕпе (демонстрацилесе) тытмалли лаптăкĕсене копетенципе килĕшӳллĕ хатĕр-хĕтĕрпе тивĕçтереççĕ. Экзамена демонстрацилесе тытма услови пурри –вĕренӳ организацийĕсен вĕренӳ программисен тытăмĕпе содержанине, пахалăхне; пурлăхпа техника базине; преподавательсен квалификаци шайне; «аталану точкисене» тупмалли тата ĕç рынокĕнчен килекен уйрăмлăхсене тĕпе хурса малашнехи аталанăва хакламалли май.

Предприятисем «Çамрăк профессионал» (WorldSkills) юхăма хутшăнакансен, ĕç кăтартса экзамен тытнă выпускниксен пĕрлехи базине кĕме ирĕк илĕç, кирлĕ компетенцисене тивĕçтерекен чи лайăх çамрăк специалистсене вĕсен професси хăнăхăвĕпе пултарулăхне хакласа суйласа илме тата персонал хатĕрлес тата ăна аталантарас енĕпе ку е вăл вĕренӳ организацине палăртма пултарĕç.

Чăваш Енĕн техникумĕсемпе колледжĕсен пысăк ушкăнĕ паянах ТОП-50 списокне рынок ыйтнипе кĕрекен чи кирлĕ профессисемпе тата специальноçсемпе кадрсем хатĕрлет. ТОП-50 перечене кĕрекен 25 специальноçпа тата профессипе халь 8 пинтен ытла студент вĕренет. Республикăн вĕренӳ заведенийĕсем кадрсене Федрецин çĕнĕ стандарчĕпе тĕнче тербованийĕсене тата хальхи технологисене пăхăнса хатĕрлеме пуçларĕç те ĕнтĕ. Çĕнĕ программăсемпе вĕренме 1,5 пин абитуриент йышăннă.

Предприятисен пурлăхĕ çинче колледжсемпе техникумсен вĕренӳпе производство лаптăкесен шучĕ ӳсрĕ.

Ĕç квалификацине вĕрентекен нумай функциллĕ центрсем ĕç паракансен паян кун кирлĕ тата пуласлăхшăн пĕлтерĕшлĕ ыйтăвĕсене тӳрех хуравласа ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Малашне республикăн гражданĕсем хăйсен професси пĕлĕвĕсене ӳстерме, професси енĕпе çĕнĕ хăнăху илме (вăл шутра ку е вăл компетенцие цифра экономикинче туянма) май паракан тытăм йĕркеленмелле.

Тепĕр утăм вăл – пулас профессие маларах хатĕрленмелли тĕрлĕ çĕрте сарăлнă центрсем тăвасси. Пĕтĕм пурлăхпа хатĕр-хĕтĕре (ресурс) – вĕрентмеллине те, оборудовани те – пĕрлештермелле, унпа гражданинсене вĕренме, çĕннине вĕренме тата ăсталаха ӳстерме май пур таран тулли усă курмалла. Паллах, пуласлăхра вертикальпе горизонталь пĕрлешĕвне тухăçлă тумасăр пулмасть.

Хальхи вăхăтра Раççейĕн аслă шкулĕсем территорисен пурнăçпа экономика аталанăвĕн драйверĕсем, инноваци ӳсĕмĕн лаптăкĕсем шутланаççĕ. Вĕренӳ, ăслăлăх, культура енĕсемпе хăйне майлă вăй парса вузсем Тăван çĕр-шывпа регионсен пулас аталанăвне ӳстерме пултаракан лидерсене çитĕнтереççĕ.

Чăваш Республикин территорийĕнче аслă пĕлӳ паракан 14 вĕренӳ организацийĕ ĕçлет, всенчен 4-шĕ – хăйсем тĕллĕн; ыттисем (10) филиал шутланаççĕ. Профессорсемпе преподавательсем – 1417

çын, ăслăлăх çыннисем – 182. Чăваш Енте студентсем вăтам вĕренӳ заведенийĕсенче 37 профессипе 98 специальноçа алла илеççĕ, специалиста 22 программăпа, бакалавра 77 программăпа, магистра 38 программăпа вĕренеççĕ.

Пирĕн шухăшпа, вузсен пулас çул-йĕрĕнчен пĕри тăтăш вĕренĕве аталантарни пулмалла. Вăл çыннăн пултарулăх хавалне çамрăкла аталантарнине тата выпускника професси енчен хатĕрлессине пĕрлештерме тивĕç.

Пире, паллах, Раççейĕн тĕп вузĕсем регионсен вĕренӳ тытăмĕпе хутшăнса ĕçленĕ опыт килĕшет. Ку вăл чи малтан шкулсен кураторĕ пулни. Пирĕн шухăшпа, вузсем хăйсем тавра экосистема туса шкулсене он-лайн пулăшăвĕ сĕнмелле, хăйсен специальноçĕсене кура профиль класĕсем уçмалла. Ку енĕпе Чăваш патшалăх университечĕ (ЧПУ) хастар ĕçлет. Кунта универстетăн пуласлăхĕ шкулсенчен килнине лайăх ăнланса илчĕç.

Университет шкулсем валли инноваци проекчĕсене чылайăн вăя кĕртсе пырать. Уйрăм вырăн 2014 çулта уçса кайран физикăпа математика факультечĕн ăс-тăн енчен çивĕч ачасемшĕн инноваци лаптăкĕ пулса тăнă çум факультечĕ йышăнать. Факультетăн «Кĕçĕн физмат» проекчĕ 2018 çулта Раççĕйĕн Вĕренӳпе ăслăлăх министерствин грантне илме тивĕçлĕ пулчĕ. ЧПУн машиностроени факультечĕ, чылай çул, Пĕтĕм Раççейĕн робототехникăпа çыхăннă «Робофест» фестивалĕн регион тапхăрнеирттерет. 2017 çулта ачасен ăслăлăхпа техника пултарулăх «Кулибин» клубĕн команди, Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар шкулĕсен ачисене пĕрлештерекенскер, фестивалĕн пĕтĕм Раççей тапхăрĕн çĕнтерӳçи пулса тăчĕ.

Чăваш патшалăх педагогика университечĕн (ЧППУн) шкулсемпе тытакан опычĕ те кăсăклă. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче ЧППУ шкул ачисемпе 28 олимпиада, 22 конференци, 50 ытла пултарулăх конкурсĕ, викторина тата ăс-хакăл вăййи ирттерчĕ. Халăх университет шăмачĕсене, инноваци технологийĕсемпе культура практикин курмалăхĕсене кăмăллать. Педагогика класĕсем нумайран нумай уçăлаççĕ. Çав классен шучĕ халь –16.

Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕ (ЧПЯХА) ял шкулĕсемпе килĕштерсе ĕçлет. ЧПЯХА пуçарăвĕпе уçнă çĕр ĕçĕ класĕсем ачасен кăмăлне çĕр ĕçĕ енне çавăракан лаптăксем пулса тăчĕç. Хальхи вăхăтра çĕр ĕçĕ класĕсем республикăн кашни районĕнчех пур.

Ял хуçалăх енĕпе вĕрентекен аслă шкулсемпе техникумсем шкулсемпе, уйрăмах ял шкулĕсемпе, пĕрлешсе ĕçленин пысăк усă пурри курăнать.

Ялта пурăнакан çемьесен çĕр лаптăкĕсем пур. Апла пулин те шкулсем те, власть органĕсем те, çемьесем те, халăх пĕрлешĕвĕсем те çамрăксен чунĕнче çĕр хуçи туйăмне, пĕчĕк çĕр-шывпа мухтанас, уншăн хурав тытас туйăма вăратаймаççĕ! Пĕрлешӳллĕ вĕренӳ программисене хастартараххăн вăй памалла, фермерсене, кил çĕрĕн хуçине хатĕрлекен программăсене пурнăçлама бюджет, кредит политикин хальхи чăнлăхне шута илсе çĕнĕ концепци вăйĕпе чĕртсе тăратмалла.

Хирĕçӳлĕх: алăра çĕр пур çинче пирĕн ачасем çав ресрус тулăх пурнăç вăйĕ пулнине хаклама пĕлмеççĕ, ăна ытлашши çăк тесе йышăнаççĕ, çĕрпе тупăшлă усă курма хăнăху çуккипе палăрса тăраççĕ!

Шупашкар коопераци институчĕ нумай çул хушши, ăнăçлăн, ачасем килĕштерекен тата профориетанцие усăллă тума май паракан «Пĕчĕк университет» программăпа ĕçлет.

Чăнах та, республикăн тĕп вузĕсем шкулсемпе тăрăшса тата пултарулăх кăтартса ĕçлеççĕ, ĕçе çĕнĕлĕх нумайран нумай кĕртсе пыраççĕ. Пуласлăхра тумалли тепĕр утăм предуниверситарисем уçасси пулма пултарать. Пирĕн шухăшпа, муниципалитет тытăмĕпе професси вĕренӳ организацийĕсем тата аслă вĕренӳ организацийĕсем хушшинчи çыхăнăва йĕркелесинче йывăрлăх пур. Кашни муниципалитета лайăх кадрсемпе тивĕçтерес пирки ĕçлемелли уçăмлă план çук. Професси ориентацийĕпе мĕнле професси илни хушшинче пысăк хирĕçӳлĕх пурри курăнать.

Аслă шкулсен ĕçĕн пысăк пĕлтĕшлĕ енĕ вăл – шкул ачисене хушма вĕренӳ пани. Вуза кĕме пулăшни мар – чаннипех хушма вĕренӳ пани. Ку вăл –вĕçĕмсĕр ĕçлекен кружоксем, мастерскойсем, тавлашупа гуманитари клубĕсем, çуллахи шкулсем.

Хушма вĕренӳ йĕркелесси, тĕпрен илсен, муниципалитетсен полномочине кĕрет. 2018/19 вĕренӳ çулĕнче Чăваш Енре хушма вĕренӳ организацийĕсем 104 пулнă.

Хушма вĕренӳ шкулĕсемпе организацийĕсенче тĕрлĕ енлĕ аталантаракан 6 пин куржокпа секци ĕçлет. Кунсăр пуçне, хушма вĕренӳ пама ирĕк паракан сертификат 130 шкулпа 153 ача пахчин пур. Тĕпрен илсен, 5–18 çулсенчи ачасемпе çамрăксенчен хушма пĕлӳ илекеннисен йышĕ 70 процентпа танлашать.

Хушма вĕренӳ организацийĕсенче ĕçлекен педагогсем йышпа 1741 çын, вĕсенчен – хушма вĕренӳ параканнисем – 722.

2024 çулта –5-рен пуçласа 18 çулчченхи ачасен 80%-ĕ хушма вĕренӳ илме тивĕçлĕ. Ку ĕçе тума, пирĕн шухăшпа, питĕ йывăр. Ансатлăх хушма вĕренĕве финанс енчен тивĕçтерĕве муниципалитет шайĕнчен регион шайне куçарсан кăна çитет – шкул умĕн тата шкул тапхăрĕн вĕренĕвĕ пек. Чăваш Енĕн муниципалитет тытăмĕсем халăх пурнăçĕпе экономика талккăшĕ пĕр пек пулманни, хула округĕсемпе муниципалитет районсен бюджечĕсем уйрăлса тăни хушма вĕренӳ илес енчен пурне те тивĕçтерес принципа тытса пыма май памасть. Ку ыйтăва татса парас тесен Федерацин «Вĕренӳ çинчен» клакан законне улшăнусем кĕртес пулать.

Шел те, хушма вĕренӳре, техника енĕпе çыхăннă çул-йĕр начар аталаннă. Шупашкар хула ача-пăча пултарулăх керменĕн никĕсĕ çине таянса ачасен техникăпа çыхăннă «Кванториум» технопаркне уçсан лару-тăру тĕпĕ-йĕрĕпе улшăнмалла. Мĕн тесен те, «Кванториум» хатĕр-хĕтерĕпе урокра тата урок тулашĕнче уса курассине йĕркелекен механизм хальлĕхе çук- ха. Пĕрлештернĕ программăсемпе уса курас ыйту тепĕр хут сиксе тухать – кунта «тахçан тĕпе йĕрĕпе маннă» шкулсем хушшинчи вĕренӳпе производство комбиначĕсене аса илни вырăнлă.

Шупашкар хулин районĕсен пултарулăх çурчĕсен хăйсемшĕн тунă лайăх проектсем пур, çапах пур енчен те тивĕçтерекен меле Çĕмĕрлере тупнă. Унта пĕчĕк хула условийĕнче ĕçлекен нумай профильлĕ вĕренӳ учреждениие хута янă. Ку учреждениере ачасен тĕслĕхлĕ виçĕ коллективĕ, çамрăксен инновациллĕ пултарулăх центрĕ, çарпа патриотизм ăс пару центрĕ т. ыт. те вырнаçнă.

Ачасен тĕпчев пахалăхне уçса панă çĕрте хăйсен тӳпи пысăк пулнине, пирĕн шухăшпа, шкул ачисен ăслăлăхпа практика конференцисем кăтартаççĕ. Чăваш Енре 20 çул ытла ĕнтĕ «Экселсиор» ăслăлăхпа практика конференцийĕ, «Пысăк Атăлăн яш ӳсĕмĕ» фестиваль конференци ирттереççĕ, шкул умĕнхи ачасем тата кĕçĕн класра вĕренекенсем валли – «Эп – тĕпчевçĕ» конкурс. Конференцисем йĕркелесе ирттерес енĕпе пуян йăла Шупашкарта, Çĕнĕ Шупашкарта, Канашра, Çĕмĕрлере тата ытти муниципалитетсенче пур.

Ку мероприятисене ирттернĕ çĕре шкул педагогĕсемпе пĕрле аслă шкул преподавателĕсем хутшăнаççĕ. Паллах, çамрăк тĕпчевçĕсен хастар ĕçне республикăн ăслăлăх обществи ертсе пыма тивĕçлĕ, анчах, шел пулин те, ку обществăна хальлĕхе туман-ха.

Вĕренĕвĕн стратеги тĕллевĕсене Раççей Федераци Президенчĕн 2018 çулхи çу уйăхĕн 7-мĕшĕнче 204-мĕш номерпа кăларнă «Раççĕй Федерацийĕн 2024 çулччен аталанăвĕн наци теллевĕсемпе стратеги задачисем» Указĕнче палăртнă. Указпа килĕшӳллĕн нацин «Вĕренӳ» проектне хатĕрленĕ. Унăн ăнăçăвĕ регионсенче тĕллев лартса хастар ĕçленинчен те нумай килет. Йывăрлăх пур пулин те, регинсенче, вĕренӳ тытăмĕ тухăçлă ĕçлеме мĕн кирли, тăтăш вĕренӳ валли мала туху условийĕ туса халăхăн пурнăç пахалăхне ӳстерме мĕн кирли пиçĕхсе çитнĕ.

**Литература списокĕ**

Алос-и-Фонт, Э. и Товар-Гарсиа, Э.Д. (2018). «Трилингвизм, билингвизм и образовательные достижения. На примере чувашского и татарского языков в сельском регионе России» (пер. с англ.). *Вопросы образования (Educational Studies Moscow).* № 3, с. 8–35.

Васильев, И.А. (2011). "Состояние, проблемы и перспективы модернизации школьного образования в российских регионах". *Регионология*. №1.

Гашков, С.Н. (2011). «Развитие регионального подхода в образовании», *Вестник Череповецкого государственного университета*. Т. 3, № 4, с. 136–138.

Дадаев, Л.М. (2012). «Доминантные тенденции и перспективы модернизации региональной системы образования», *Управление экономическими системами*. № 9, с. 47-51.

Задорожная, Е.К. (2006). «Состояние и перспективы развития системы образования: региональный аспект», *Известия Южного федерального университета. Технические науки.* № 2, с. 37-42.

Лысков, А.Ф. (2009). «Человеческий капитал: понятие и взаимосвязь с другими категориями», *Менеджмент в России и за рубежом*. № 6, с. 3–11.

Панасенко, К.Е. (2009). «К проблеме разработки модели управления региональным рынком образовательных ресурсов», *Вестник Бурятского государственного университета*. Серия: Педагогика. Филология. Философия.

Панасенко, К.Е. (2011). «Региональная система образования: проблемы и перспективы», *Вестник Кемеровского государственного университета культуры и искусств.*

Пономарев, Р.Е. (2014). *Образовательное пространство: монография*. Москва: МАКС-Пресс. 100 с.

Пономарева, О.Н. (2012). «Повышение квалификации учителей: проблемы и пути решения в российском образовании», *Известия Пензенского государственного педагогического университета имени В.Г. Белинского*. № 28, с. 957–960.

Шабанова, М.М. и Алиева, Р.О. (2010). «Регионализация образования как важный фактор сбалансированного социально-экономического развития региона». *Гуманизация образования.*

«Конституция Российской Федерации» (принята всенародным голосованием 12.12.1993) (с учетом поправок, внесенных Законами РФ о поправках к Конституции РФ от 30.12.2008 N 6-ФКЗ, от 30.12.2008 N 7-ФКЗ, от 05.02.2014 N 2-ФКЗ, от 21.07.2014 N 11-ФКЗ). 12 декабря 1993 г., http://www.consultant.ru/document/cons_doc_LAW_28399 (Дата поиска: 10 января 2020 г.).

«Об образовании в Российской Федерации: Федеральный закон от 29 декабря 2012 г. №273-ФЗ (с изм. и доп.)». 29 декабря 2012 г., http://www.consultant.ru/document/ cons_doc_LAW_140174 (Дата поиска: 10 января 2020 г.).

«Об утверждении федерального государственного образовательного стандарта дошкольного образования: Приказ Минобрнауки России от 17 октября 2013 г. №1155». 17 октября 2013 г., https://www.garant.ru/products/ipo/prime/doc/70412244 (Дата поиска: 10 января 2020 г.).

Приказ Министерства образования и науки РФ от 6 октября 2009 г. N 373 "Об утверждении и введении в действие федерального государственного образовательного стандарта начального общего образования" (с изменениями и дополнениями от: 26 ноября 2010 г., 22 сентября 2011 г., 18 декабря 2012 г., 29 декабря 2014 г., 18 мая, 31 декабря 2015 г.). 6 октября 2009 г., https://base.garant.ru/197127/ (Дата поиска: 10 января 2020 г.).

«Приказ Министерства образования и науки РФ от 17 декабря 2010 г. N 1897 "Об утверждении федерального государственного образовательного стандарта основного общего образования (с изменениями и дополнениями от 29 декабря 2014 г., 31 декабря 2015 г.)». 17 декабря 2010 г., https://base.garant.ru/55170507/ (Дата поиска: 10 января 2020 г.).

«Об образовании в Чувашской Республике: Закон Чувашской Республики от 30 июля 2013 года № 50». 30 июля 2013 г., https://base.garant.ru/26589688/ (Дата поиска: 10 января 2020 г.).

«Об утверждении Стратегии социально-экономического развития Чувашской Республики до 2035 года: Постановление Кабинета Министров Чувашской Республики от 28 июня 2018 г. №254». 28 июня 2018 г., http://docs.cntd.ru/document/550129673 (Дата поиска: 10 января 2020 г.).

Администрация Президента Чувашской Республики. (2008). Стратегия развития образования в Чувашской Республике до 2040 года: утверждена Указом Президента Чувашской Республики от 21.03.2008 № 25. Чебоксары: Чувашия, 142 с.

